24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
МАЙ
14
ЮНКУН
111 (5826) №

# ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

## Çуракине пысăк ăнăçлăхпа вĕçлер

Республикăра массăллă çураки пуçланчĕ. Малта пыракан колхозсем акана организованно туса пыраççĕ. Вĕсем хăйсен ака планĕсене тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ, ака ĕçне пысăк пахалăхпа тата кĕске срокра, большевикла хăвăртлăхпа ирттерессишĕн кĕрешеççĕ.

Партипе правительство тырпул тухăçне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени колхозниксемпе колхозницăсен хастарлăхне çĕклесе, хавхалантарса пырать.

Çак кунсенче хаçатсенче Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн ирттернĕшĕн, 1941 çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн районсене, МТ Станцисене, колхозсене тата уйрăм колхозниксене Хисеп Хăми çине кĕртесси çинчен тата Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн куççуль çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕпе премилемелле тăвасси çинчен йышăннă постановленисем пичетленсе тухрĕç. Республикăри колхозниксем, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пырса, Хĕрлĕ Ялава илме тивĕçлĕ пулассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Халĕ колхозлă уйхирсенче ăмăрту саккăлсах пырать. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, акари ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пыракан сеяльщиксен, сухаçсен, трактористсен, колхозниксен речĕ йышлăн хутшăнать.

«Красный луч» колхозра (Первомайски р.) В. Николаев сеяльщик 13 ретлĕ сеялкăпа ĕç нормине 143 процент тултарса пырать. «Красноармеец» колхозра (Калинински р.) Никитинпа Кириллов колхозниксем майăн 8-мĕшĕнче ака ĕçĕнчи пĕр кунхи нормăна 140 процент тултарнă. «Авангард» колхозра (Первомайски р.) С. Семенов сеяльщик 12 ретлĕ сеялкăпа пĕр сменăра хăйĕн нормине 130 процент тултарнă. Çав районри «Красное Именево» колхозра Семенов сеяльщик 13 ретлĕ сеялкăпа сменăра 7 гектар акас вырăнне 11 гектар акса пынă.

Пăрачкаври машинно-тракторнăй станцинчи П. Кулаковпа Н. Кулаков трактористсем сменăра 13,3 гектаршар сухалана. Вĕсен тракторĕсем йĕркеллĕ, пĕр ванмасăр ĕçлеççĕ. Канашри машинно-тракторнăй станцин тăваттăмĕш тракторнăй бригадăри тракторист тултарассишĕн кĕрешмелле. Лашапа акмалли плансене те вăхăтра тата пĕтĕмпех тултармалла. Тракторсемпе кăнтăрла та, çĕрле те ĕçлессине, лашапа акакан сеялкăсемпе яра-кунĕпе ĕçлессине пур çĕрте те йĕркелемелле.

Çураки — колхозлă ялăн пит те хĕрӳ ĕç вăхăчĕ. Халĕ колхозра акаран хаклăрах та пахарах ĕç урăх нимĕнле ĕç те пулма пултараймасть. Çавăнпа та мĕнпур резервсемпе усă курса мĕнпур массăллă ĕçе уя куçарса пĕтĕм пултарулăха хурса ĕçлемелле.

Уйрăм вырăнсенче çакăн пек туртăм пур: кăшт çумăр çусанах хирти ĕçе пăрахса яла кĕреççĕ. Çав вăхăтрах лайăх ĕçлекен колхозсенче бригадăсем, звеносем çăмăр чарăннă вăхăтсене сыхласах тăраççĕ, çăмăр вăхăтлăха чарăннă хушăрах нумай ĕç тăваççĕ. Пур çĕрте те çавăн пек ĕçлени кирлĕ.

Пирĕн колхозсен кăçал вăйлă тырпул туса илме кирлĕ условисем пурте пур. Çак условисемпе пĕлсе тата туллин усă курни кăна кирлĕ. Партипе совет организацисен задачи — çуракине ăнăçлăн ирттерме тивĕçлипе пулăшса пырасси, конкретлă, оперативлă ертсе пырасси пулать. Хальхи вăхăтра уйрăмăнах агрономсен ролĕ пысăкланать. Агрономсен ĕç вырăнĕ халĕ — уйра, ака пынă çĕрте. Агротехникăна пăсса ĕçленисене вăхăтрах палăртса, вăл çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле.

Çураки — вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешес ĕçĕн ăнăçлăхне татса паракан тапхăр. Партипе совет организацисен, çĕрĕç органĕсен, агрономсен хальхи вăхăтра хисеплĕрен те хисеплĕ ĕçĕ — вăл акана хăвăртрах вĕçлессишĕн, кашни гектар çĕр лаптăкĕшне паха акса хăварассишĕн большевикла кĕрешесси пулать. Çуракине каррăн, йĕркеллĕн ирттерер, çуракинче кая юлса пынине пĕтерер.

агрономĕ Антонов та, райçĕрпайĕн главнăй агрономĕ Димитриев та пĕлнĕ, анчах агротехникăна пăснине хирĕç вĕсем кирлĕ мерăсем йышăнман.

«Коминтерн» колхозра (Хĕрлĕ Чутай р.) 13 ретлĕ сеялка пур пулсан та, малтанхи кун уя тухсан 6 гектар çĕре алăпа акнă. «Большевик» колхозра та (Первомайски р.) 4 гектар сĕлĕпе викăна алăпа акса хăварнă «Красный партизан» колхозра (Елчĕк р.) 3 гектар ытла кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕре сӳрелемесĕрех тĕштырă акса тухнă. Чылай колхозсенче ăшăх, шырлăклă сухалани колхоз бригадисенче çеç мар, трактор бригадисенче те пур.

«Путь Ленина» колхозра (Чкаловски р.) 14-мĕш тракторнăй бригада ăшăх тата шырлăклă сухалана. Ку бригада сухаланине 26 гектар пăрахăçланă. «Майăн 1-мĕшĕ» колхозра виççĕмĕш тракторнăй бригада 10—12 сантиметр тарăнăш кăна сухаланă. Трактористсен бригадирĕ çак çитменлĕхпе кĕрешес вырăнне хăй те агротехникăна пăсас çул çине тăнă. Машинно-тракторнăй станцин дирекцийĕ, агрономсем бригадăсен ĕçĕсене куллен сăнаса, тĕрĕслесе пымаççĕ.

Чылай çĕрте халĕ çакăн пек çитменлĕх пурри палăрать: акас ĕç суха ĕçĕнчен юлса пырать. Элĕк районĕнче майăн 12-мĕшне пĕтĕмпе çĕре 1060 гектар акма юрăхлă туса хатĕрлесе — сухаласа, культиваци туса тата сӳрелесе хунă. Анчах çав акма хатĕр çĕртен 276 гектар кăна акса хăварнă. Ку çитменлĕх вăл ытти районсенче те палăрать.

Çуракин ăнăçлăхне халĕ уйра бригадăсен, звеносен, трактористсен тата сеяльщиксен ĕçне тĕрĕс йĕркелени татса парать. Анчах апла пулин те, чылай колхозсенче звеносен ĕçне кăçал та кирлĕ пек йĕркелеме тăрăшманни палăрать. Хăшпĕр звеносем хăйсен участокне халĕ те пĕлмеççĕ. Уйрăм бригадăсем звеносем тăрăх ĕçлемеççĕ.

Колхоз руководителĕсен çакна асра çирĕп тытмалла: çуракине васкавлăн, хăвăрт, кĕске срокра ирттересшĕн кĕрешнипе пĕрлех, ĕçĕн пахалăхне ӳстересшĕнпе вирлĕн кĕрешмелле. Ака ĕçне çиелтен туни, колхоз уйхирĕсене шырлăклă сухалани колхоза та, государствăна та сиенлĕ.

Çуракине ăнăçлăн ирттерес ĕçре трактор вăййĕпе те, лаша вăййĕпе те туллин усă курмалла. Ака планне машинно-тракторнăй станци тăрăх пĕтĕмпе кăна мар, кашни бригада, тракторист тултарассишĕн кĕрешмелле. Лашапа акмалли плансене те вăхăтра тата пĕтĕмпех тултармалла. Тракторсемпе кăнтăрла та, çĕрле те ĕçлессине, лашапа акакан сеялкăсемпе яра-кунĕпе ĕçлессине пур çĕрте те йĕркелемелле.

Çураки — колхозлă ялăн пит те хĕрӳ ĕç вăхăчĕ. Халĕ колхозра акаран хаклăрах та пахарах ĕç урăх нимĕнле ĕç те пулма пултараймасть. Çавăнпа та мĕнпур резервсемпе усă курса мĕнпур массăллă ĕçе уя куçарса пĕтĕм пултарулăха хурса ĕçлемелле.

Уйрăм вырăнсенче çакăн пек туртăм пур: кăшт çумăр çусанах хирти ĕçе пăрахса яла кĕреççĕ. Çав вăхăтрах лайăх ĕçлекен колхозсенче бригадăсем, звеносем çăмăр чарăннă вăхăтсене сыхласах тăраççĕ, çăмăр вăхăтлăха чарăннă хушăрах нумай ĕç тăваççĕ. Пур çĕрте те çавăн пек ĕçлени кирлĕ.

Пирĕн колхозсен кăçал вăйлă тырпул туса илме кирлĕ условисем пурте пур. Çак условисемпе пĕлсе тата туллин усă курни кăна кирлĕ. Партипе совет организацисен задачи — çуракине ăнăçлăн ирттерме тивĕçлипе пулăшса пырасси, конкретлă, оперативлă ертсе пырасси пулать. Хальхи вăхăтра уйрăмăнах агрономсен ролĕ пысăкланать. Агрономсен ĕç вырăнĕ халĕ — уйра, ака пынă çĕрте. Агротехникăна пăсса ĕçленисене вăхăтрах палăртса, вăл çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле.

Çураки — вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешес ĕçĕн ăнăçлăхне татса паракан тапхăр. Партипе совет организацисен, çĕрĕç органĕсен, агрономсен хальхи вăхăтра хисеплĕрен те хисеплĕ ĕçĕ — вăл акана хăвăртрах вĕçлессишĕн, кашни гектар çĕр лаптăкĕшне паха акса хăварассишĕн большевикла кĕрешесси пулать. Çуракине каррăн, йĕркеллĕн ирттерер, çуракинче кая юлса пынине пĕтерер.

## Союзри уйхирсенчи çураки

Майăн 5-мĕш тĕлне Союзри уйхирсенче 29.337 пин гектар çине çурхи культурăсем акнă — плана 31 процент тултарнă. Май уйăхĕн пирвайхи пилĕк-кунлăхĕнче Мордва тата Тутар республикисенче, Хабаровск крайĕнче, Мускав, Ленинград, Горький, Рязань тата Ярославль облаçĕсенче çураки сарăлса кайнă. Иртнĕ çулти майăн 5-мĕш тĕлне кăçалхинчен 13 республикăпа облаçсем çуракине ытларах массăллăн пуçланă пулнă, мĕншĕн тесен кăçал çанталăк условийĕсем урăхларах.

Кăнтăр енчи нумай республикăсемпе облаçсенче çураки вĕçленсе килет. Çураки ĕçĕсене пĕлтĕрхинчен лайăхрах тăваççĕ. Киргиз ССР плана 90 процент тултарнă та ĕнтĕ, Орджоникидзе крайĕ 94 процент, Молдаван ССР тата Крым АССР—92 процент, Узбекистан—90 процент. Украинăри колхозсем пучахлă культурăсем тĕлĕнпе плана ирттерсе тултарнă, хĕвелçаврăнăш акса пĕтернĕ, çĕрмамăк акса пĕтереççĕ. Киргизи, Орджоникидзе крайĕ тата кăнтăр енчи ытти районсем пучахлă культурăсем акмалли плана 100 процент ытла тултарнă. Азербайджан, Грузин, Молдаван СС Республикисем, Крым АССР, Çурçĕр Кавказри нумай районсем хĕвелçаврăнăш акмалли плана чылай ирттерсе тултарнă. Киргиз, Молдаван, Грузин СС Республикисем, Краснодар крайĕ, Днепропетровскпа Николаев облаçĕсем сахăр кăлмanĕ акса пĕтернĕ, ăна çавăн пекех Казахстанри тата Одесса облаçĕнчи колхозсем те акса пĕтереççĕ.

Кăçалхи çул çĕрмамăк акас ĕç уйрăмах ăнăçлăн пулса пырать. Майăн 5-мĕш тĕлне колхозсем ăна акмалли плана 96 процент тултарнă. Çĕрмамăк акса тăвакан тĕп районсем акса пĕтернĕ те ĕнтĕ. Калчасем пур çĕрте те лайăх ӳсни палăрать.

Майăн 10-мĕш. (ТАСС).

## СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Государствăн М. И. Калинин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ 8-мĕш номерлĕ заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне хĕçпăаллантарас ĕçре калама çук пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн, вооруженин çĕнĕ образецĕсене тунăшăн тата вĕсене производствăра туса кăларма вĕренсе çитнĕшĕн государствăн М. И. Калинин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ 8-мĕш номерлĕ заводне **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** наградăлас.

**СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.**
**СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль.
1941 çулти майăн 12-мĕш.

### Государствăн М. И. Калинин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ 8-мĕш номерлĕ завочĕн работникĕсене наградăлани

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне хĕçпăаллантарас ĕçре калама çук пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн, вооруженин çĕнĕ образецĕсене тунăшăн тата вĕсене производствăра туса кăларма вĕренсе çитнĕшĕн СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ государствăн М. И. Калинин ячĕпе тăракан 8-мĕш номерлĕ Ленин орденлĕ завочĕн работникĕсене СССР орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă.

**Ленин орденĕпе** çаксене наградăланă: **Л. А. Локтев** — главнăй конструктор, **Б. А. Фраткин** — завод директорĕ, малтан Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланăскер, **Л. И. Шамшурин** — старший мастер, **И. В. Штарев** — слесарь.

**Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** 10 çынна наградăланă.

**Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе** 19 çынна наградăланă.

**«Знак Почета» орденĕпе** 25 çынна наградăланă.

**«За трудовую доблесть» медальпе** 24 çынна наградăланă.

**«За трудовое отличие» медальпе** 16 çынна наградăланă. (ТАСС).

## Ĕç вăйĕсен резервисен Главнăй Управлени активĕн пухăвĕ

Майăн 10-мĕшĕнче Мускавра Ĕç вăйĕсен резервисен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнăй Управлени активĕн канашлăвĕ уçăлнă. Унăн ĕçне 800 çынна яхăн — ĕç вăйĕсен резервисен республикăсенчи, крайсенчи тата облаçсенчи управленийĕсен начальникĕсем, шкулсен директорĕсемпе вĕсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсем, мастерсем, наркоматсен тата профсоюз центральнăй комитечĕсен представителĕсем, Мускав хулипе Мускав облаçĕнчи училищĕсемпе ФЗО шкулĕсен работникĕсем хутшăннă.

Канашлу кун йĕркинче пĕр ыйту — ФЗО шкулĕсенче, ремесленнăй училищĕсемпе чугунçул училищисенче производство ĕçне вĕрентесси мĕнле пынине çинчен тата 1941 çулта резервсем хатĕрлес ĕç задачисем çинчен тăракан ыйту. Ĕç вăйĕсен резервисен Главнăй Управленийĕн начальникĕ П. Г. Москатов юлташ доклад тунă.

— Республикăсенче, крайсенче тата облаçсенче,—тет Москатов юлташ,—ФЗО шкулĕсене 1335 шкул, ремесленнăй училищĕсемпе чугунçул училищисене 477 шкул организациленĕ. Вĕсенче 700 пин çын ытла вĕренет.

Ĕç вăйĕсен резервисене вĕрентсе хатĕрлеме кирлĕ условисене партипе правительство йăлтах туса пачĕç.

Пирвайхи пилĕк уйăх хушшинчи вĕренӳ итогĕсем çакăн çинчен калаççĕ: ФЗО шкулĕсенчен нумайĕшĕ начар мар результатсем пачĕç. Вĕренекенсем профессисене ăнăçлăн вĕренсе алла илеççĕ, вĕсем пысăк ĕç тухăçлăхĕ параççĕ. Угольщиксен ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсем миллион тонна ытла çĕркăмăр кăларнă. Сталино облаçĕнче вĕренекенсен 84 проценчĕ кадровăй рабочисем валли палăртса çирĕплетнĕ нормăсене ирттерсе тултараççĕ. ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсем нумайĕшĕ виççĕмĕш, тăваттăмĕш тата пилĕкмĕш разряд квалификацийĕсене илнĕ.

Производство ĕçне вĕрентмелли çĕнĕ системăна тĕрĕс йĕркелесе ярсан, вăл чаплă результатсем парĕ. Çапла пулсан та çак системăпа пур çĕрте те марха усă курасçĕ. Нумай училищĕсенче малтан çамрăксене вĕрентессине классечи «условнăй ĕççене» организацилеме хăтланнă. Сăмахран, Курск облаçĕнчи ремесленнăй училищĕсенчен пĕринче телеграф юписене лартас ĕçе пӳлĕмсенче вĕреннĕ. Угольщиксен хăшпĕр шкулĕсенче вĕренекенсене ĕç валли кивелсе çитнĕ механизмсемпе инструментсем панă, япăхса кайнă участоксем уйăрса панă.

Малалла Москатов юлташ ремесленнăй училищĕсемпе чугунçул училищисен ĕçĕсем çинчен калать. Вĕренекенсем пур çĕрте те пекех элементарлă операцисем çинчен йывăртарах операцисем çине куçнă. Анчах та производство ĕçне вĕрентессине çителĕксĕр организациленĕ училищĕсем те пур-ха. Горький облаçĕнчи 7-мĕш номерлĕ ремесленнăй училищĕре вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймаççĕ.

Москатов юлташ вĕренекенсене политикăллă тата культурăллă воспитани парасси çинчен тĕплĕн каланă. Ĕç вăйĕсен резервисен управленийĕсен, училищĕсемпе шкулсен хăшпĕр руководителĕсене — воспитанниллĕ ĕçе администрацилессине улăштаракан руководительсене докладчик хытă критикленĕ. Сталинград облаçĕнчи управлени начальникĕ Молчанов юлташ, сăмахран, начар дисциплинăллă вĕренекенсене формăллă тумтир тăхăнма чаракан приказ кăларнă.

Юлашкинчен Москатов юлташ çапла пĕлтернĕ: июнь уйăхĕнче промышленноçлă предприятисем, стройкăсем тата чугунçул транспорчĕ массăллă профессисене вĕреннĕ 250 пин рабочи илеççĕ. Вĕсене лайăх кĕтсе илмелле, ĕç вырăнĕсем, хваттĕрсем хатĕрлесе хумалла.

Июньпе август уйăхĕсенче ФЗО шкулĕсене, ремесленнăй училищĕсемпе чугунçул училищисене çĕнĕ çамрăксене илеççĕ. Пурĕ 700 пин çын илмелле. Ĕç вăйĕсен резервисен управленийĕсен начальникĕсем, училищĕсемпе шкулсен директорĕсем çак пысăк та кирлĕ ĕçе тума большевикла хатĕрленме тивĕçлĕ.

* * *

Виçĕ кун хушши ĕçленĕ хыççăн пуху майăн 12-мĕшĕнче хупăннă. Москатов юлташ доклачĕ тăрăх пренисенче 45 çын тухса каланă.

Унтан ĕç вăйĕсен резервисен Главнăй Управленийĕн начальникĕ Москатов юлташ юлашки сăмах тухса каланă.

Пуху пысăк çĕкленӳпе Сталин юлташ патне салам яма йышăннă. (ТАСС).

## Профсоюзсен кану çурчĕсем 630 çурт

20 çул каярах, 1921 çулти майăн 13-мĕшĕнче, В. И. Ленин кану çурчĕсем организацилесси çинчен калакан декрета алă пусса çирĕплетнĕ. Çак декрета кăларнă хыççăн профессиллĕ союзсем Мускав патĕнче — Саратовăра, Серебряннăй Борта тата ытти вырăнсенче пирвайхи кану çурчĕсене уçнă. Вĕсене помещиксен аллинче пулнă усадьбăсенче, монастырьсенче тата хула тулашĕнчи дачăсенче организациленĕ.

Малаллахи çулсенче вĕсен хисепĕ хăвăрт ӳссе пынă. Çĕршывăн кăнтăр енчи районĕсенче, Çĕпĕрте, Уралта тата Инçетри Çурçĕрте кану çурчĕсене вуншар çурт организациленĕ. Хальхи вăхăтра ВЦСПС-ăн тата профсоюзсен центральный комитечĕсен кану çурчĕсем 630 çурт ĕçлеççĕ. Унсăр пуçне, сывлăха сыхлас ĕç органĕсем, промысла кооперацийĕн, халăх комиссариачĕсен тата ытти учрежденисен те кану çурчĕсем нумай. Республикăсенче ачасем, йывăрсын хĕрарăмсем, кăвăр ачиллĕ амăшсем, çамрăксем валли ятарласах тунă кану çурчĕсем пур т. ыт. те.

Пĕрремĕш пятилетка çулĕсенче профсоюзсен кану çурчĕсенче государство соцстрахĕн средствисен шучĕне 2.633 пин çын каннă, иккĕмĕш пятилеткăра — 6.960 пин çын, виççĕмĕш пятилеткăн виçĕ çулĕ хушшинче — 6.230 пин çын каннă.

Кану çурчĕсене тытса тăрас, çĕнĕрен тăвас ĕçсем валли кашни çул ытлах те пысăк средствăсем расходлаççĕ. Çак ĕçсенче 1941 çулта кăна профсоюз организацийĕсем государство соцстрах бюджечĕн средствисенчен 500 миллион тенке яхăн расходлаççĕ.

(ТАСС).

## Лотерей билечĕсене ăнăçлăн сарчĕç

ШАХАСАН. Шуркасси ялсовечĕ Осоавиахимăн XV-мĕш лотерей билечĕсене вырнаçтарас ĕçе ирттерме ятарласа комисси уйăрнă. Вăл комисси ялти активпа тачăн сыхăнса ĕçлерĕ. Колхозниксене лотерей ирттерни мĕнле усă пани çинчен тĕплĕн ăнлантарса пачĕç. Çакăн хыççăн лотерей билечĕсене пысăк хаваслăхпа илме тытăнчĕç. Ялсовечĕ тăрăх 920 тенкĕлĕх сарнă.

В. НИКАНОРОВ.

ÇĔРПУ. Тавăшкассинчи туллимăр вăтам шкулти учительсем лотерей билечĕсене кашниех 20—25 тенкĕлĕх плачĕç. Колхозниксем хушшинче те лотерей билечĕсене ăнăçлăн сарнă. Паянхи куна ялсовечĕ ирттерни вырнаçтарнă.

Лотерей билечĕсене сарас ĕçре А. Соколов, К. Миронов, В. Яковлев, А. Иванов юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

П. М.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Совет Союзĕн Геройĕсем (сулахайран сылтăмалла) — капитансем Н. П. Ильченко, А. Ф. Васильев тата майор М. А. Лукин.

А. Межуев фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

## *Уйхирсенчи çурхи ĕçсем*

### Элĕк районĕнчи колхозсенче

Ефим Иванов — Элĕк МТС 5-мĕш тракторнăй бригадин бригадирĕ. Кăçалхипе вăл çак бригадăна виççĕмĕш çул ертсе пырать. Кашни çулах паха тĕслĕхсем кăтартать. 5-мĕш бригада кăçал та никамран малтан суха тума тухнă.

Иванов юлташ бригадинче 3 трактор, вĕсенчен пĕри «ЧТЗ». Кĕрхи çĕртме тунă вырăнта ку тракторпа сменăра 10 гектар сухалаççĕ, бригадир хăй ĕçленĕ чухне 12 гектар сухалать. Майăн 12-мĕш тĕлне вăл трактор çинче 4 смена ушкăнă, çав сменăсем хушшинче 50 гектар сухаланă.

5-мĕш бригада Мăн Выляри 10-мĕш номерлĕ тракторнăй бригадăпа ăмăртать. Вĕсем хăйсем çине татăклă обязательствăсем илнĕ: трактор ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса пыма, бригадăна панă заданисене ирттерсе тултарса пыма пулнă. Бригадăра 6 тракторист, кашни хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пыма тăрăшать. Вĕсен ĕç пахалăхне бригадир яланах тĕрĕслесе тăрать.

* * *

Вутланти «Большевик» колхоз çурхи сухана майăн 7-мĕшĕнче тухрĕ. Ун хыççăн икĕ кун çумăр çурĕ. Майăн 10-мĕшĕнчен пуçласа уяр çанталăк тăрать, ака-суха ĕçне сарса пыма питĕ лайăн. Апла пулсан та колхозра васкани курăнмасть-ха. Майăн 11-мĕш тĕлне 3 тата 11 ретлĕ сеялкăсемпе пĕтĕмпе 6 викка 1,7 гектар, ясмăк 3 гектар кăна акнă. 2-мĕш бригадăра 11 ретлĕ сеялкăна виçĕ сехет хушши ăхаль тăратнă. Ку вăл колхозниксем хушшинче ĕç дисциплини япăхса кайнинчен килнĕ. Уйра ĕçлекенсем патне колхозниксем кăнтăрлахи апат илсе тухнă. Сеялщиксем Кондратий Николаевпа Лука Харитонов кăнтăрла тырă пăкасран хăраса апатпа пыракансенчен пăрăнса урăх çулпа яла тарса тавăрăннă..

Тепĕр çитменлĕх — куллен ĕçе учета илсе пыманни. Бригадирсен ĕçе кашни кун йышăнмалла, колхозниксене ĕçкунĕсем лартса памалла. Çакна пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Çураки ĕçĕсем пуçланнăранпа 5 кун иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче кам миçе ĕçкунĕ тунă, ĕç пахалăхĕ мĕнле пулнă — саксем нимĕн те палламаççĕ. Çапла вара колхозра стахановецсем те, кахалсем те пĕр кисепрех тăраççĕ. Бригадирсем япăх ĕçленĕ ĕçĕсене браклама «вăтанаççĕ» иккен.

— Ĕçе куллен хакласан колхозниксенчен куçран ӳкес пулать, — тет 2-мĕш бригадăн бригадирĕ Орлов.

Колхозра ыран мĕн ĕçлемелли çинчен малтанхи кунах наряд памалла. Кунта ĕçе çухсан тин камăн мĕн ĕç тумаллине кăтартса параççĕ, çав хушăра хаклă вăхăт нумай сая каять.

Колхоз агрономĕ Смелов юлташ уйра колхозниксемпе пĕрле пулас чухне ял хушшинчех пурăнать.

**Ив. МОСЕЕВ.**

* * *

ЭЛĔК, майăн 12-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районĕпе 92 колхозран 66 колхозра кĕрхи тырăсем çине клевер 1930 гектар акса хăварнă. Плана 100 процент тултарнă. Малтан акнă клевер чылай колхозсенче пит те тикĕс мăтса тухнă. Пусуçаврăнăш майĕпе районра татах 26 колхозра 620 гектар çурхи тырăсем çине клевер акса хăвармалла. Çак колхозсем клевер вăрлăхĕсене лайăх хатĕрлесе çитернĕ. Халĕ акма тытăнаççĕ.

Тĕштырă акмалли çĕр лаптăкĕсене 1050 гектар сухалаланă. Вăл шутран 276 гектар акнă. Юлашки иртнĕ кунсенче çумăрсем тăнă пирки ака ĕçĕ вăрахăн пычĕ. Майăн 10-мĕшĕпе 11-мĕшсенче районра пур колхозсенче те утăлăх викăпа сĕлĕ акмалли çĕр лаптăкне 270 гектар сухаласа 192 гектар акнă.

**ВОЛКОВ.**

Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

## *Тракторсене кĕтеççĕ*

ÇĔМĔРЛЕ, майăн 12-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районра ака ĕçĕ сарăлса пырать. Майăн 10-мĕш тĕлне 1463 гектар сухалаланă, 721 гектар акнă. Унсăр пуçне 1323 гектар çинче калчасене апат шанă, кĕрхи тырăсене 372 гектар сӳреленĕ.

Ака ĕçĕ «Красноармеец» тата «14 лет Октября» колхозсенче ăнăçлăн пулса пырать. Сăмахран, «Красноармеец» колхоз паянхи куна 400 гектар ытла сухаланă, çурри ытла акнă.

Анчах хăшпĕр колхозсем васкамаççĕ. Мыслецри «Ударник» колхоз майăн 4-мĕшĕнчех акма тытăннă, апла пулин те халĕ 3 гектар кăна акнă, 38 гектар сухаланă. Ĕнер çанталăк уяр тăвĕ, çапах та колхоз акма тухмарĕ. Кунта тракторсем килсе ĕçлесе парасса кĕтсе лараççĕ.

«Полярная звезда» колхозра алăпа акнисем пулнă. **(Хамăр корр.).**

## *Колхоз массăллă акара*

ÇĔРПУ, майăн 13-мĕш. **(Телефон тăрăх).** «Юлаш» колхоз майăн 10-мĕшĕнче массăллă акана тухрĕ. Бригадăсем малтанхи кунах нормăна тултарса ĕçлерĕç. Майăн 12-мĕшĕнче ĕç тухăçлăхĕ татах та ӳсни палăрчĕ. 3-мĕш бригадăри сухаçсем Федоров, Матвеев, Семенов т. ыт. те кулленхи нормăна 150-шар процент тултарса пычĕç.

— Пирĕн бригада иртнĕ çулта та малта пычĕ. Кăçал та эпир начар ĕçлеместпĕр. Колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени ĕç кастарлăхне хăпартать, — тет ватă сухаç Т. Федоров юлташ.

Анчах пур бригадăсенче те ĕç çавăн пек ăнăçлă пулса пымасть-ха. 1-мĕш бригада кая юлать, ĕç нормине тултараймасть. Ку колхозра 4 бригада валли икĕ сеялка пур. Вĕсемпе туллин усă курмалла. Анчах хăшпĕр бригадăсем сеялкăпа кирлĕ пек усă кураймаççĕ.

Колхозăн хăйĕн агроном пур. Анчах вăл уйхир ĕçĕсемпе сахал интересленет. Колхоз малтанхи хут акана тухнă кун агроном уйра пулмарĕ.

**Н. МИРОНОВ.**

# ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

## Коммунистсен сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн

«Суйлавсене ертсе пыни кирлĕ. Парти райкомĕсен, горкомсен тата обкомсен обязанноçĕ—партин пуçламĕш организацисене суйлавсене ирттерме пулăмасси, вĕсене йăнăш-мĕн пулассинчен сыхласси»,—тесе çырчĕ «Правда» хаçат.

Суйлавсене эпир тĕплĕн хатĕрленсе ирттертĕмĕр. Парти райкомĕн бюро членĕсем, отделсен заведующийĕсем, инструкторсем пуçламĕш парторганизацисене суйлавсем ирттерме активлăн пулăшса пычĕç. Партин пуçламĕш организацисене каякан кашни юлташ умнех эпир партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатас, ĕçсыннисене ВКП(б) XVIII конференцийĕн решенийĕсене тата СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тăлесси çинчен йышăннă постановлениесене пурнăçа кĕртме мобилизацилес задача лартрăмăр.

Пур пуçламĕш организацисенче те отчетпа суйлав пухăвĕсем ЦК ВКП(б) инструкцийĕпе парти уставĕпе кăтартăн тăрăх иртрĕç. Пуçламĕш парторганизацисенчи коммунистсем отчетлă докладсене пысăк активлăхпа сăтсе-яврĕç, çитменлĕхсене хытă критиклерĕç. Вĕсем хăйсем ВКП(б) XVIII конференцийĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртме хатĕр тăнине кăтартса пачĕç. Пухура пулнă коммунистсенчен 87 проценчĕ отчетлă докладсем тăрăх пулнă пренисенче тухса калаçнă. Кунтан ĕнтĕ коммунистсем идейăпа политика тĕлĕнпе ÿссе пыни лайăх курăнать. Суйлав вăхăтĕнче çамрăк коммунистсен активлăхĕ пысăк пулнине те палăртмасăр иртме çук. Кăçал парти членне илнĕ Васильев юлташ хăйсен пуçламĕш парторганизаци çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине чылай фактсемпе сирĕплетсе пачĕ. Буторова юлташ хăшпĕр коммунистсен партиллĕ поручени çукки çинчен каларĕ. Кунти коммунистсем ВКП(б) райкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене те хытă критиклерĕç, инструкторсем пуçламĕш организацисенче сахал пулнине тата партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăхлатма çителĕксĕр пулăшнине кăтартса пачĕç.

Ĕçсыннипе депутачĕсен райсовет исполкомĕнчи пуçламĕш организацири коммунистсем кунти парторганизаци хăй йышăннă решенисене çителĕклĕ пурнăçламанни çинчен, çавăн пекех тата пуçламĕш организаци партире тăман юлташсем хушшинче ĕçлессине манса кайни çинчен нумай каларĕç. Исполком аппарачĕ пур ĕçсене те вăхăтра туса пыман. Кунти хăшпĕр работниксем ĕç дисциплинине çирĕппĕн пăхăнман. Анчах райсовет исполкомĕн председателĕ Петров юлташ унти работниксем хушшинче ĕçсене епле пурнăçланине кирлĕ пек, çителĕклĕ таран тĕрĕслесе тăман.

Кăшаркассинчи «Пионер» колхоз—районри пысăк колхозсенчен пĕри. Пĕрик çул каялла вăл районра малта пыракан колхозсен шутĕнче тăнă. Общественăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессине лайăх организациленĕ, çак отраслĕрен пысăк тупăш илсе тăнă. Анчах юлашки вăхăтра ку колхозри руководительсем колхозниксем хушшинче ĕç дисциплинине начарлатнă. Хăшпĕр колхозниксем колхоз ĕçне ячĕшĕн кăна хутшăннă. Çакна пула кунта иртнĕ кĕркунне 1000 пăт ытла çĕрулмине кăлармасăрах шăнтса янă. Вылăх чĕрлĕх фермисенче те, лаша витинче те йĕркелĕх сахал пулнă. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Никитин юлташ çак фактсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Пухура пулнă пур коммунистсем те отчетлă доклад тăрăх пынă пренире кун çинчен нумай чарăнса тăвĕç, ВКП(б) XVIII конференцийĕн решенийĕсене, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлениене пурнăçа кĕртсе пыма пулчĕç.

Иртнĕ çул хушшинче районри пуçламĕш парторганизацисем парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшса пырса, ĕççыннисем хушшинчо политикăллă ыйтусем тăрăх докладсемпе лекцисем тата калаçусем туса ирттерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Педучилищĕри парторганизаци преподавательсемпе студентсен политикăллă пĕлӳне хăпартас ыйтусем тăрăх 30 доклад ирттернĕ. Партиллĕ-политикăллă ĕçе начар мар организацилени çинчен çак факт та лайăх çирĕплетсе парать. Çак вĕренӳ çулĕнче кунта 31 номер стена хаçачĕ кăларнă. Стена хаçачĕсем вĕренӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме чылай пулăшнă. Студентсенчен нумайĕшĕ вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ. Училище республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнать. Училищĕри пуçламĕш парторганизаци комсомол организацине ертсе пырассине те лайăхлатрĕ. Çак çула кĕнĕренпе 76 çамрăка комсомол ретне илнĕ. Комсомолецсем вĕренӳре пример кăтартса пыраççĕ.

Çĕрпӳ хулинчи вăтам шкулта ĕçлекен коммунистсем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» учебник тăрăх пурте вĕренсе тухнă, халĕ вĕсем Ленинпа Сталинăн уйрăм произведенийĕсене вĕренеççĕ. Çав вăхăтрах кунта çитменлĕхсем те çук мар. Парторганизаци учительсене общественăллă ĕçе кирлĕ пек хутшăнтарман, училищĕри общественăллă организацисен комсомол, профсоюз т. ыт. ĕçне кирлĕ пек ертсе пыман. Кунтан ĕнтĕ çакă палăрать: парти историне вĕренсе илнĕ пĕлĕве кунти учительсем практикăллă ĕçпе сахал сыхăнтарнă, шкулти пĕтĕм ĕçе чăннипех кирлĕ пек лайăхлатса яма пултарайман.

Районри хатĕрлев организацисем çителĕклĕ ĕçлеççĕ теме çук-ха. Кунта парти тата государство дисциплинине пăсакансем те пулнă. Заготскотра ĕçленĕ Сазонов вылăх леçме пыракансене улталанă, уншăн ăна судпа ответ тыттарчĕç. ВКП(б) членĕн кандидачĕ Васильев юлташ кирлĕ пек ĕçлемест, ун çумне çирĕплетнĕ участок хатĕрлев планне тултарас тĕлĕшпе пĕрмаях юлса пырать. Агентсем хушшинче революциллĕ законлăха пăсакансем пулнă. Тăрех калас пулать, уполнаркомзаг çумĕнчи пуçламĕш организаци ĕç дисциплинине çирĕплетес тата партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемен.

Партин пуçламĕш организацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем лайăх иртрĕç, коммунистсем пуçламĕш организацисен иртнĕ вăхăтри ĕçĕсене активлăн сăтсе-яврĕç. Çак вăхăтрах çитменлĕхсем пулчĕç. Ачасен çурчĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Егорова юлташ доклад çырса хатĕрлемесĕрех пухăва пынă. Тĕлĕнмелли çук ĕнтĕ, çакна пула вăл тунă доклад пурĕ те 10 минута хушши кăна пынă. Кунти пуçламĕш парторганизаци ĕçĕнче çитменлĕхсем сахал мар. Партире тăманнисем хушшинче кăна мар, коммунистсем хушшинче те дисциплинăна пăхăнманнисем пур. Сăмахран, парти кандидачĕ Никанорова юлташ çын кайса чĕннĕ хыççăн çеç отчетпа суйлав пухăвне пынă.

Райçĕрĕç пайĕнчи пуçламĕш организацире те отчетпа суйлав пухăвĕ, хăшпĕр коммунистсем пыманнине пула, палăртнă кунне мар, тепĕр кунне çеç пулса иртнĕ.

Партин пуçламĕш организацисене ертсе пырас ĕçе пултаракан тата ĕçре тĕрĕсленнĕ юлташсене суйларĕç. Вĕсем хушшинче çамрăк коммунистсем те нумай. Иртнĕ çулта пуçламĕш организацисен секретарĕсем хушшинче пĕр хĕрарăм çеç пулнă, кăçалхи суйлавра 5 организацире хĕрарăмсене секретарь пулма суйланă. Ку ĕнтĕ хĕрарăм-коммунисткăсем идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çулран-çулах ÿссе пыннине пĕлтерет.

«Прожектор» колхозри, примус горелкисем тăвакан заводри тата МТС-чи организацисен ĕçне çителĕксĕр тесе хак панă. Ку организацисенчи çитменлĕхсемшĕн парти райкомĕ те айăплă. Сăмахран, МТС-чи организацинех илер. Парти райкомĕн инструкторĕсем ку организацире сайра-хутра кăна пулнă. Парти райкомĕн секретарĕсем те кунта кайсан парторганизаци ĕçĕпе тĕплĕн паллашмасăрах тухса кайнă. МТС çумĕнчи парторганизацинче трактористсемпе комбайнерсем тата ытти работниксем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне питĕ начар тухса пынă. Отчетлă тапхăр хушшинче парти ретне икĕ çын çеç илни те çакна лайăх çирĕплетсе парать.

Примус горелкисем тăвакан заводри пуçламĕш парторганизацинчи коммунистсем те партиллĕ тата государственăллă дисциплинăна пăсса пынă. Парти членĕн кандидачĕ пулнă Тарасов прогул тунă, ăна судпа айăпланă. Çакăн пек йĕркесĕр ĕçсем кунта татах пулнă.

Пуçламĕш парторганизацисенче пуринче те коммунистсем пăнă сĕнӳсене шута илсе тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕç. Вăл решенисене йышăннă чухне ВКП(б) XVIII конференцийĕн решенийĕсене тĕп никĕсе хунă.

Хăшпĕр пуçламĕш организацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсенче парса хăварнă сĕнӳсене пурнăçа кĕртме тытăнчĕç. Педучилищĕра вĕренекенсем пурте социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Кунти учительсем вĕренӳпе воспитанни ĕçне татах та лайăхлатма тăрăшрĕç. Анчах ку вăл пуçламĕшĕ çеç-ха. Коммунистсен сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кулленех ĕçлесе пымалла. Пуçламĕш организацисен хăйсен ĕçне пĕтĕмпех лайăхлатмалла.

Районри колхозсенче халь хĕрсех çуркуннехи ĕçсем пыраççĕ. Пирĕн кăçал ака ĕçĕсене иртнĕ çулхинчен татах лайăх ирттерме пур условисем те çителĕклĕ. Парторганизацисен çуракине тата ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене кăтартуллă ирттерессишĕн çине тăрса ĕçлемелле. Колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисемпе кандидат групписем ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле, ку ыйтусем тавра колхозниксен сарлака массисене мобилизацилемелле, коммунистсем хăйсем сăмахпа кăна мар, практикăллă ĕçпе пример кăтартмалла. Кунпа пĕрлех 1941 çулти халăх хуçалăх планне пур енĕпе те вăхăтра тата ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешмелле.

Иртнĕ çулта пирĕн районри пуçламĕш парторганизацисенче партиллĕ-массăллă ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Ялхуçалăхĕнче малта пыракан çынсене — трактористсене, комбайнерсене, колхоз председателĕсене, бригадирсене, вылăх-чĕрлĕх ферминче ĕçлекен работниксене парти ретне илес тĕлĕшпе питĕ çителĕксĕр ĕçленĕ. Парторгансене халь çĕнĕрен суйланнă çынсен çак çитменлĕхсене вăхăтрах пĕтерес пулать.

Умра тăракан задача—ВКП(б) XVIII конференцийĕн решенийĕсене тата партипе правительство йышăннă ытти решенисене те тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пырасси. Иккĕленмелли çук, пуçламĕш парторганизацисене çĕнĕрен суйланă юлташсем çак задачăсене ăнăçлăнах пурнăçа кĕртсе пырĕç.

**Д. АНДРЕЕВ.**

ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ.

## Аппарат ĕçне лайăхлатассишĕн кĕрешмелле

Чăвашсоюзри пуçламĕш организацин отчетпа суйлав пухăвĕ икĕ куна пычĕ. Партбюро отчечĕ тăрăх пренире 11 коммунист тухса каларĕç. Вĕсем пурте парторганизацин отчетлă тапхăрти ĕçĕсене тимлĕн тишкерсе тухса лайăх сĕнӳсем парса хăварчĕç. Парторганизаци агитацилле-массăллă ĕçе лайăх организациленĕ. Отчетлă тапхăрта килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче тĕрлĕ ыйтусем тăрăх 143 калаçу туса ирттернĕ. Çав калаçусене пурĕ 1225 çын итленĕ. Кусемсĕр пуçне Чăвашсоюзра ĕçлекенсем валли, ВКП(б) горкомĕн лекторĕсен вăййĕпе, лекцисем нумай туса ирттернĕ.

Чылай агиторсем агитаци ĕçне куллен туса пыраççĕ. Лагутинпа Вяткин юлташсем пĕрмаях участоксенче пулаççĕ. П. Федоров юлташ çрнерен пĕр кун политинформаци ирттерет.

Пуçламĕш парторганизацинче 29 коммунист, вĕсенчен партi членĕ 19 çын шутланать. Отчетлă тапхăрта парти членне 6 çын, кандидата 2 çын илнĕ. Коммунистсенчен чылайăшĕ хăйсен политикăллă пĕлӳлĕхне куллен хăпартса пыраççĕ. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» 11 коммунист вĕренсе пĕтернĕ.

Партбюро «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» IV-мĕш сыпăкĕ тăрăх тăватă тĕкĕн тата тăватă хутчен юлташла калаçусем туса ирттернĕ. Кусемсĕр пуçне, уйрăм коммунистсемпе виçĕ хутчен юлташла калаçу ирттернĕ. Анчах, çаксем вĕсем пысăк ĕçĕн пуçламăшĕсем çеç-ха. Партбюро уйрăм коммунистсем теори енчен мĕнле ÿссе пынине çителĕксĕр интересленнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ, пренире тухса каланисем çамрăк коммунистсем хушшинче ĕçлессине вăйлатма хушса хăварчĕç. Васильев юлташ икĕ çул ĕнтĕ ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» III-мĕш сыпăкне вĕренет. Жалобова юлташ çинчен те çавнах каламалла. Апла пулин те, партбюро çак коммунистсене вĕренӳре сахал пулăшнă. Çавна пулах «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вăтам звенопа вĕренекенсен кружокĕ те саланса кайнă. Кружокра вĕренме 4 коммунист, 3 комсомолец, партире тăманнисенчен пĕр çын çыранна пулнă. Кружок руководителĕ пулса ĕçленĕ Маскаев юлташ Хĕрлĕçара кайнă хыççăн, кружока ертсе пыраканĕ пулман. Чылай вăхăт иртнĕ хыççăн çеç кружок руководительне Пенкермана, унтан Судаков юлташсене уйăрнă. Вĕсем те парторганизаци хушнă ĕçе вĕçне çити туса пыман.

Чăвашсоюзри пуçламĕш парторганизаци тăватă предприятине пĕрлештерсе тăрать. Çав предприятисенче пурĕ 346 çын ĕçлет, вĕсенчен профсоюз членĕнче 249 çын тăрать, е вăл 72 процент пулать. Профсоюз организацин предприятисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисене профсоюз членне илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Çавăн пекех, аппаратра ĕçлекенсем хушшинче те социализмлă ăмăрту ĕçне анлăн сарса яман. Чăвашсоюзра ĕçлекенсенчен 43,5 проценчĕ çеç ăмăртса ĕçлеççĕ. Чăвашсоюз Мари республикинчи потребсоюзпа социализмлă ăмăрту договорĕ тунă пулсан, çав договора мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине пĕрре те тĕрĕслемен. Парторганизаци социализмлă ăмăрту договорĕ тăрăх илнĕ обязательствăсене тултарса пынине тĕрĕслесе тăман, ку ĕçе пĕтĕмпех профсоюз организацине шанса панă.

Партбюро отчечĕ тăрăх пренире тухса каланă коммунистсем аппаратра дисциплина вăйсăрланни çине кăтартса пачĕç. Профсоюз членĕсен пухăвне пурте çӳремеççĕ е питĕ кая юлса пыраççĕ. Осанов юлташ Чăвашсоюз аппаратĕнче ĕçе тунине ялан тĕрĕслесе тăманни çинчен каларĕ. Орготдел начальникĕ пулнă Сарро Центросоюз постановлениене икĕ уйăх хушши хăй аллинче тытса усранă.

Лукиянов юлташ партбюро отчетĕнче коммунист-руководительсем мĕнле ĕçленине тĕплĕн çутатса паман, терĕ. Партбюро,—тет Лукиянов юлташ, — уйрăм коммунистсем ĕçе мĕнле хăнăхса пынипе тата хушнă ĕçе мĕнле туса пынипе интереслеммен. Аппаратра культура сахал, уйрăм работниксем ĕçпе пынă çынсемпе кăмăллăн калаçмаççĕ. Тепĕр чухне, телефонпа каласа чухне те тем те пĕр каласа вăрçаççĕ. Парторганизацин аппаратра çирĕп дисциплина тата культурăпа йĕркелĕх туса хурас пирки ыйтăва уйрăмăнах çирĕппĕн лартас пулать.

**А. ГРИГОРЬЕВ.**

## Хастарлă учительница-коммунистка

Тавăшкассинчи туллимар вăтам шкулти (Çĕрпӳ р-нĕ) учительсем тăрăшса ĕçленĕ вăхăтрах, çине тăрса вĕренсе пыраççĕ. Шкулти 9 учительрен 5 учитель «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе тухнă.

Пирĕн коллективра учительница-коммунистка Е. Миронова юлташ уйрăмах тăрăшса вĕренет. Вăл ĕнтĕ ку шкулта 26 çул, Тавăшкассинче шкул уçăлнăранпах ĕçлет.

Е. Миронова юлташ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» 1939 çултах вĕренсе тухнă. Хальхи вăхăтра вăл К. Маркс «Капиталĕн» I томне вĕренсе пĕтерчĕ. Ленинпа Сталинăн уйрăм произведенийĕсене вĕренет. Пире, харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен çамрăк учительсене, кулленех пулăшса, консультацисем парса пырать. Эпир мĕн пĕлменнине яланах унтан ыйтса вĕренсе пыратпăр.

Е. Миронова юлташ Çĕрпӳ райкомĕн парткабинечĕ ирттерекен лекцисене те çара кайнă хыççăн, кружока ертсе пыраканĕ пулман. Чылай вăхăт иртнĕ хыççăн çеç кружок руководительне Пенкермана, унтан Судаков юлташсене уйăрнă. Вĕсем те парторганизаци хушнă ĕçе вĕçне çити туса пыман.

Чăвашсоюзри пуçламĕш парторганизаци тăватă предприятине пĕрлештерсе тăрать. Çав предприятисенче пурĕ 346 çын ĕçлет, вĕсенчен профсоюз членĕнче 249 çын тăрать, е вăл 72 процент пулать. Профсоюз организацин предприятисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисене профсоюз членне илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Çавăн пекех, аппаратра ĕçлекенсем хушшинче те социализмлă ăмăрту ĕçне анлăн сарса яман. Чăвашсоюзра ĕçлекенсенчен 43,5 проценчĕ çеç ăмăртса ĕçлеççĕ. Чăвашсоюз Мари республикинчи потребсоюзпа социализмлă ăмăрту договорĕ тунă пулсан, çав договора мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине пĕрре те тĕрĕслемен. Парторганизаци социализмлă ăмăрту договорĕ тăрăх илнĕ обязательствăсене тултарса пынине тĕрĕслесе тăман, ку ĕçе пĕтĕмпех профсоюз организацине шанса панă.

Партбюро отчечĕ тăрăх пренире тухса каланă коммунистсем аппаратра дисциплина вăйсăрланни çине кăтартса пачĕç. Профсоюз членĕсен пухăвне пурте çӳремеççĕ е питĕ кая юлса пыраççĕ. Осанов юлташ Чăвашсоюз аппаратĕнче ĕçе тунине ялан тĕрĕслесе тăманни çинчен каларĕ. Орготдел начальникĕ пулнă Сарро Центросоюз постановлениене икĕ уйăх хушши хăй аллинче тытса усранă.

Лукиянов юлташ партбюро отчетĕнче коммунист-руководительсем мĕнле ĕçленине тĕплĕн çутатса паман, терĕ. Партбюро,—тет Лукиянов юлташ, — уйрăм коммунистсем ĕçе мĕнле хăнăхса пынипе тата хушнă ĕçе мĕнле туса пынипе интереслеммен. Аппаратра культура сахал, уйрăм работниксем ĕçпе пынă çынсемпе кăмăллăн калаçмаççĕ. Тепĕр чухне, телефонпа каласа чухне те тем те пĕр каласа вăрçаççĕ. Парторганизацин аппаратра çирĕп дисциплина тата культурăпа йĕркелĕх туса хурас пирки ыйтăва уйрăмăнах çирĕппĕн лартас пулать.

**А. ГРИГОРЬЕВ.**

## Агитаторсем уйра

Актайри «Комбайн» колхоз (Элĕк р.) çуракине майăн 9-мĕшĕнче тухрĕ. Колхозниксем уйра ĕçленĕ вăхăтра кăнтăрлахи апатра агитаторсем каласа çитерессе, хаçат-журналсем вуласа параççĕ.

Кашни бригадăрах икшер номер стена хаçачĕ кăларнă. Ку енĕпе Иван Филиппов юлташ тăрăшса ĕçлет. Хаçатсенче лайăх ĕçлекен бригадăсемпе уйрăм колхозниксен ĕçне кăтартса параççĕ. Пĕрремĕш бригадăра суха тăвакан Катерина Егорова, Дмитрий Агафонов, иккĕмĕш бригадăра Павел Петров, Василий Назаров колхозниксем кулленех ĕç нормисене 125—130 процент тултарса пыраççĕ.

**С. ТИХОНОВ.**

## Малта пыракан класри ĕçсем

Красноармейскинчи вăтам шкулти Х-мĕш «А» класра вĕренекенсен пĕрин те янăх отметкăсем çук. Вĕренекенсенчен ытларахăшĕ «хорошо» тата «отлично» отметкăсем илсе пыраççĕ. Ачасем шкула сиктермесĕр çӳресси, дисциплина тата санитари енĕпе те класс шкулта малти вырăнта тăрать.

Çак çитменлĕве тума пире, пуринчен ытла, ачасем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса вĕренни пулăшрĕ. Социализмлă ăмăрту договорĕсем мĕнле пурнăçа кĕнине эпир кашни кулленех тĕрĕслетпĕр. Уроксем хыççăн класри организатор уйрăм вĕренекенсен ĕçĕнче палăрнă çитменлĕхсем çинчен каласа парать. Унтах (пухура яланах класс руководителĕ те пулать) çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсене те палăртатпăр. Стена хаçачĕ те кашни номертех вĕренӳ ыйтăвĕсене сутатса пырать.

Ачасем пурте вĕренӳре ĕлкĕрсе пычăр тесе преподавательсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем вĕренӳре каярах юлса пыракансемпе уйрăмăн занятисем ирттереççĕ.

Вуннăмĕш класра вĕренекенсем—ÿссе çитĕнсе пыракан, часах ĕнтĕ харпăрхăй тĕллĕн ĕçлеме тытăнас çамрăксем. Вĕсем тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе тата ытти нумай ыйтусемпе те интересленеççĕ. Çавна асра тытса, эпир политикăллă ыйтусем тăрăх ĕрнере икĕ хут калаçусем туса ирттеретпĕр.

Вĕренекенсем хушшинчи дисциплинăна çирĕплетме, вĕренӳри хастарлăха ÿстерме шкула килсе тăракан çырусем те пулăшаççĕ. Пирĕн шкултан иртнĕ вăхăтра вĕренсе тухнисем нумайĕшĕ аслă шкулсенче вĕренеççĕ е тĕрлĕрен вырăнсенче ĕçлеççĕ. Çапла, сăмахран, Хусанти университетра вĕренекен отличник П. Борисов, Горькири шыв-çул транспорт инженерĕсен институтĕнчен Г. Иванов тата ытти юлташсем те шкула çырусем яраççĕ. Красноармеецсемпе краснофлотецсенчен, çар шкулĕсенчи курсантсенчен çырусем килеççĕ. Вĕсем, тăван çĕршывăн хĕрӳллĕ патриочĕсем, хăйсен ĕçĕсемпе вĕренĕвĕ çинчен калаçса парса, шкулта вĕренекенсен хастарлăхне ÿстереççĕ. Çавăн пекех тата эпир Ригăри вăтам шкулпа та çырусем тăрăх сыхăну тытатпăр.

Хальхи вăхăтра пирĕн класра та испытанисене хатĕрленес ĕç хĕрӳллĕн пырать. Преподавательсем пурте программа тăрăх вĕреннĕ материала тепĕр хут аса илтереççĕ. Лайăх вĕренсе пыракансем те хăйсен çая юлса пыракан юлташĕсене пулăшаççĕ. Испытанисене ирттерме эпир хатĕрленсе çитнĕ.

**М. МЕФОДЬЕВА.**
**Красноармейскинчи вăтам шкулти Х-мĕш «А» класс руководителĕ.**

## ФЗО шкулĕсен, ремесленнăй училищĕсемпе чугунçул училищисен çĕнĕ çурчĕсем

Кăçалхи çул облаçсенче, крайсемпе республикăсенче ремесленнăй училищĕсем валли вĕренӳпе производство çурчĕсем, ФЗО шкулĕсен общежитийĕсем валли çĕнĕ çуртсем тума пуçлаççĕ. Вĕсен пĕтĕм хакĕ 70 миллион тенкĕ ытла пулать.

Проект тăрăх ремесленнăй училищĕн çĕнĕ çуртне 400 çынна вĕрентмеллĕх шутласа тăваççĕ. Унта вĕренӳ аудиторийĕсемпе кабинечĕсем, физкультура залĕ, душ, столовăй, мастерсемпе преподавательсем валли служебнăй пӳлĕмсем пулаççĕ. Производство ĕçне вĕренмелли корпусра станочнăй цехпа слесарно-механически цех, тимĕрçĕ, сварочнăй, литейнăй цехсем, хăшпĕр училищĕсенче йывăç каскалама вĕренмелли мастерскойсем пулаççĕ. 16 училище çумĕнче интернатсем тума палăртнă, кашни интернатрах 400 вырăн пулмалла.

Çавăн пекех тата типовăй мар çуртсен пысăк строительствине пуçлама палăртнă. Çак строительство ĕçĕнче 185 миллион тенкĕ расход пулмалла.

# РЕЗЕРВСЕН ВĂРÇИ

Империализмлă пĕрремĕш вăрçă çулĕсенчех снарядсене калама çук нумай расходлани, вăрçă вăрçмалли кивĕ средствăсене çĕнетни тата çĕнĕрен туса яни мирлĕ вăхăтра кăна хатĕрленĕ вооруженипе средствисемпех тата боеприпассемпех вăрçă вăрçма май çуккине кăтартса панă.

Верден патĕнче икĕ эрне хушши пынă паллă çапăçусенче Франци артиллерийĕ 4 миллион снаряда яхăн, 120 пин тонна чухлĕ, кăларса янă.

Вăрçă вăрçакан государствăсен авиацийĕн вăрçă пуçламĕшĕнче темиçе çĕр самолет кăна пулнă пулсан, вăрçă пĕтнĕ тĕле стройри тата резерври темиçе теçетке пин самолетран тăнă.

1918 çулта союзниксен çарĕн аллинче темиçе пин танк пулнă, чи малтан танксем çапăçусем пынă çĕрте 1916 çулта кăна курăннă. Вăрçă хатĕрĕсем тăвакан промышленность предприятийĕсемпе промышленность отраслисен, çарпа флот валли заказсене пурнăçламалла тунăскерсен, производствăллă мощноçĕ çителĕклĕ пулман. Çĕнĕ предприятисем, азот тата алюминий предприятийĕсене тата ыттисене те тумалла пулнă, çав предприятисем ун чухнехи вăрçăччен пачах пулман, пулнă пулсан та сахал шутланнă.

Хальхи вăхăтри, империализмлă икĕмĕш вăрçăра производствăллă резервсен пĕлтерĕшĕ, империализмлă пĕрремĕш вăрçăрипе танлаштарсан, татах та ытларах ÿснĕ.

Ютçĕршывсенчи пичет хак панă тăрăх, хальхи вăхăтра вăрçăн малтанхи çулĕсенче вăрçă вăрçакан государствăсен 10 пин самолета яхăн пĕтнĕ. Вăрçăн пиррвайхи 67 эрни хушшинче 1900 судно ытла путарнă, вĕсен пĕтĕм водоизмещенийĕ 8,3 миллион тоннăна яхăн.

Хальхи вăхăтра çар техники тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа ăталанса пырать. Строя çĕнĕ конструкципе тунă самолетсем, танксем, тинĕс-çар суднисем кĕреççĕ, артиллерине те çĕнĕ средствăсем кĕртеççĕ.

Вăрçă умĕн вооруженин хатĕр запасĕсене пысăккăн тытса тăрсан, çав запассем кивелме пултараççĕ. Çавăнпа та капитализмлă пысăк державăсем вăрçă вăрçмалли средствăсене **вăрçă пынă вăхăтра** ытларах туса кăларма тăрăшаççĕ.

Вăрçă ĕçĕсене пула Франципе Бельгире фабрикăсемпе заводсен предприятийĕсене темиçе пин предприятине çĕмĕрсе тăкнă. Германи тата Англи авиацийĕ пĕр-пĕрин çине тăтăшах пырса бомбăсем пăрахнă вăрçă хатĕрĕсем туса кăлараканскер чи пысăк заводсене кăштах (хăшпĕр чухне йăлтах) стройран кăларать. Промышленноçпа транспорта пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерме **чĕртавар резервисемпе производствăллă мощноçсен резервисене** тытни çакăншăн кирлĕ те ĕнтĕ. Государствăсем çав резервсене тăваççĕ те, вĕсем стратегиллĕ чĕртавар запасĕсене пухаççĕ тата çĕнĕ предприятисем тăваççĕ.

США-па Британи империйĕ тройственнăй пакт çĕршывĕсем — Германи, Италия тата Япония шăратничен хурçă икĕ хут ытларах шăратса кăлараççĕ. США-ра тата Англи владенийĕсенче сайра тĕл пулакан металсем—никель, молибден, ванадий чылай пур. США-па Англире тĕслĕ металсен ресурсĕсем те тройственнăй пакт çĕршывĕсенчен чылаях пысăк. Алюминине илес пулсан вара, ку тĕлĕшпе Германи, Италия тата Япония хăйсен противникĕсенчен пуянтарах.

Англипе Германи хушшинче вăрçă луçланас умĕн капитализмлă государствăсем чи кирлĕ пулса тăракан стратегиллĕ чĕртавара кĕрсе килессине хыттăн ÿстернĕ.

Сăмахран, 1938 çулта Германине, 1929 çултипе танлаштарсан, хромовăй рудана тăватă хут ытла, никель рудине бокситсене виçĕ хут ытларах, нефтепродуктсене, асбеста тата тăхлан рудине икĕ хут ытларах кÿрсе пынă.

Çав çултах Японине, 1929 çултипе танлаштарсан, нефтепродуктсене тата хура металлурги ломĕсене виçĕ хут ытларах кÿрсе пынă.

Англия çав вăхăт хушшинче нефтепродуктсене кÿрсе пырассине виçĕ хут тата алюминине пăхăр кÿрсе пырассине икĕ хут ÿстернĕ.

Италипе Франция вăрçă умĕн нефтепродуктсене, тĕслĕ металсене, марганец рудине тата вăрçăн ытти материалĕсене кÿрсе килессине чылаях ÿстернĕ.

Чĕртаварсен **резервисене вăрçă пынă вăхăтра** кăна мар, тата тĕрлĕ майсемпе **шалти ресурссене пухнипе** те туса пынă.

Капитализмлă хăшпĕр государствăсенче правительствăсем ятарласа йышăннă постановлениесемпе промышленноçпа суту-илÿ организацийĕсене предприятисемпе складсенче чĕртаварăн тата топливăн яланлăх, пĕчĕкленмен запасĕсене туса хума хушнă. Çав запассен виçи тĕрлĕрен пулнă. Тупса хатĕрленĕ чĕртавар запасĕсемсĕр пуçне тата сырье кăлармалли вырăнсене те йăлтах резерв туса хунă. США-ра, сăмахран, тинĕс-çар флотне шĕвĕ горючи парса тăма 1938 çулта Калифорнире ятарласах нефтеноснăй участоксем уйăрнă пулнă; çав участоксене, пĕтерсе лартма парас мар тесе, çав районра, йĕритавра пин миля чухлĕ вырăнта, нефть тата газ концессийĕсене илме чарнă.

Стратегиллĕ чĕртавар запасĕсене пысăккăн туса хунипе вăрçă вăрçакан державăсем вăрçăн пиррвайхи çулĕнче, империализмлă пĕрремĕш вăрçăри пек, чылай материалсем тĕлĕшпе хыттăн аптраман.

Çар промышленноçне хăвăртлăх вăйлатса пыма урăх çĕршывсенчен кÿрсе килнĕ материалсен пысăк запасĕсем пурри чылай пулăшнă. Германине, сăмахран, 1934 — 1939 çулсем хушшинче вольфрам концентрачĕсене 47 пин тонна кÿрсе пынă, ку вăл çак металла пĕтĕм тĕнчипе çулталăкра вăтам хисеппе кăларнинчен пĕрре çурă хут ытларах пулать. Вольфрам — твердăй сплавсен чи кирлĕ пайĕ, унпа усă курни металсен обработкине 4—6 хут ÿстерет. Çав твердăй сплавсемпе анлăн усă курса, Германипи çар промышленноçĕ вооруженисене тата çар снаряженине противник промышленноçĕнчен пысăк хăвăртлăхсемпе туса кăларма пултарнă.

Францине çĕнтернĕ хыççăн нимĕçсен пĕр журналĕ: Германия çĕнтересси чылай енчен твердăй сплавсенчен тунă çивĕч хĕçпăшалран килнĕ, тесе сырнă. Ютçĕршывсенчи пичет çырнă тăрăх, Германире вольфрам пачах кăлармаççĕ, анчах та унпа Германире, США-ринчен, икĕ хут ытларах усă кураççĕ, США-н вольфрам тĕлĕшĕнчи потребноçĕн çуррине хăйĕн ресурсĕсемпех витме май пур.

Анчах чĕртавар ресурсĕсем çар производствисене вăйлатса пыраççинче вĕсем çеç ĕçе татса параканни пулса тăмаççĕ-ха. Сырьена вооружени хатĕрĕсемпе боеприпассем тăвас пулсан, **ятарласа тунă оборудовани тата хатĕрленĕ кадрсем** кирлĕ.

Промышленноçăн производствăллă мощноçĕ — ку е вăл государство потенциалĕн кирлĕрен те кирлĕ показателĕ. Çак производствăллă мощность çĕнĕ предприятисене ĕçе янă май улшăнать. 1935 çул тĕлне самолетсем туса кăларас енĕпе Англипе Франция Германипе Италирен малта тăнă. Анчах тепĕр пилĕк çултан положени улшăннă. Çĕнĕ производствăллă мощноçсем туса, Германи самолетсем туса кăларас тĕлĕшпе Англирен, Францирен тата США-ран, виççĕшне пĕрле илсе, иртсе кайнă.

Çĕнĕ производствăллă мощноçсем туса хута ярасси тата сывлăшран пырса бом

# Етĕрне—Çĕмĕрле çулĕн строительстви

**(Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕпе, Етĕрне—Çĕмĕрле çул строительствин начальникĕпе М. Ф. ТЕРЕНТЬЕВ юлташпа калаçни)**

Чăваш республики лайăх та çирĕп çулийĕрсем тăвас тĕлĕшпе пысăк ситĕнӳсем турĕ. Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче 3650 километр тăршшĕ çул хывнă.

Анчах хытă сийпе витнĕ çулсем пирĕн сахал-ха, ун пек çулсен тăршшĕ мĕнпурĕ те 563 километр кăна, ытти çулсем çуллахи типĕ çанталăкра çеç çӳреме юрăхлă, йĕпе-сапа чухне вĕсем тăрăх çӳреме питех те хĕн. Етĕрнепе Çĕмĕрле хушшинчи çул пирĕн республикăн хуçалăхлă-экономикăлла пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать пулин те, йĕпе-сапа чухне ку çул тăрăх çӳреме май сукпа пĕрех. Унăн тăршшĕ 54 километр, вăл шутран 45 километра чул сарса тухман. Çак çул начар пулнă пирки Етĕрнери арех тата су завочĕсен ĕçĕнче сахал мар чăрмавсем пулаççĕ, унсăр пуçне республикăри хăшпĕр районсем Çĕмĕрле станципе çыхăну тытаймаççĕ.

Етĕрнепе Çĕмĕрле хушшинчи çул республикăн халăх хуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çак çула кăçал пĕтĕмпех туса пĕтерсе, эксплоатацине пама йышăнчĕç. 45 километр тăршшĕ çула чулпа сарса тухмалла, çĕрĕсене 235 пин кубометр тумалла.

Çак çула вăхăтра туса çитересси — пит те пысăк задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Уншăн пирĕн пĕтĕм хастарлăхпа кĕрешмелле. Етĕрнепе Çĕмĕрле хушшинчи çула тăвас ĕçе Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр, Çĕмĕрле, Советски, Элĕк, Калинински, Пăрачкав, Октябрьски, Вăрнар тата Куславкка районĕсем хутшăнмалла. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ кашни район тăрăх график çирĕплетрĕç. Çак графика майăн 15-мĕшчен ялсоветсемпе колхозсене çитерсе памалла. Колхозниксемпе ĕççыннисем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе анлăн туса пырса, социализмла ăмăртăва пуçарса тата ертсе пымалла, графика кашни кун, кашни бригада, кашни колхозпа ялсовет тăрăх тултармалла, çапла вара çул строительствине срокра туса çитермелле.

Анчах калас пулать, чылай районсем паянхи куна çитсе те çулĕр строительстви хăвăртлăхне вăйлатас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеççĕ. Сăмахран, Куславккари карьерта 18 пин кубометр чул кăларса, Етĕрне — Çĕмĕрле çулĕ çине турттармалла. Кунта чул хатĕрлеме пачах тытăнман-ха.

Май, июнь тата июль уйăхĕсем — çулийĕр строительстви валли чи лайăх вăхăт, унпа туллин усă курас пулать.

Çулийĕр строительствипе эпир начар ĕçлетпĕр-ха. Хамăран ĕçри пур ситменлĕхсене те çийĕнчех пĕтерсе пырса, пирĕн малти рете тухассишĕн большевикла кĕрешмелле.

## Районсенчен пĕлтереççĕ

ЕТĔРНЕ, майăн 13-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районри пур колхозсенче те çулийĕр строительстви енĕпе ĕçлекен бригадăсем организациленĕ. Çак бригадăсене уйхирти çурхи ĕçсенчен хăтараççĕ, вĕсем Етĕрне—Çĕмĕрле çулĕ çине ĕçлеме тухаççĕ.

Пирĕн районра яланлăх карьерăсем çук, çавăнпа та хăл вăхăтĕнче чул хатĕрлеме тĕл килмерĕ. Юр ирĕлсен, апрель уйăхĕнче кăна чул хатĕрлеме тытăнтăмăр. Халĕ çул çинче 1000 кубометрытларах чул пур. Çитес кунсенче çул çине чул тата ытти материалсене турттарса кăларма тытăнатпăр.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ çул строительствинче сутуилӳ ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе конкретлă мерăсем ĕнтĕлеççĕ. Сутуилӳ организацисен таварсем çителĕклĕ тăратмалла.

Политикăлла-массăллă ĕçĕн планĕ пур. Çул строительствинче ĕçлекенсем валли хаçат-журналсем çителĕклĕ пулаççĕ, кинофильмсем кăтартаççĕ. Кашни участокра, бригадăра агитаторсемпе беседчиксем пулаççĕ, вĕсем унта стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

**В. АКИМОВ.**
ВКП(б) Етĕрне райкомĕн секретарĕ.

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 13-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Етĕрне—Çĕмĕрле çулне туса пĕтересси çинчен» йышăннă постановление ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче сӳтсе-явнă. Çак постановлението пурнăçа ăнăçлăн кĕртсе пыма конкретлă мероприятисем йышăннă.

Халĕ çул строительствинчи ĕçсен графикне кашни колхозпа ялсовета çитерсе панă. Чылай колхозсем торцовка валли материалсем хатĕрлеме тытăнчĕç. Паянхи куна виçĕ километр тăршшĕ сармалăх хатĕрленĕ. Ку тĕлĕшпе «Мотор» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем ĕçе хастарлăн тытăнчĕç. Пур колхозсенче те çулийĕр строительствине ĕçлеме бригадăсем тунă. Çул строительствинче кунсерен вăтам шутпа 300—350 çын ĕçлет.

Çул строительстви мĕнле пынине радио тăрăх тата хаçатсем урлă çутатса пама тытăнатпăр. Бригадăсене кашни кунах стена хаçачĕсем кăларма тытăнаççĕ. Агитаторсемпе вулавçăсене тата беседчиксене ĕçре кулленех пулăпса пыма райкомăн икĕ инструкторне уйăрнă.

**М. КУЗЬМИН.**
ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕ.

## Колхозри плотина

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Исаково ялĕ витĕр Кĕçĕн Шетмĕ шывĕ юхса выртать. Çак пĕчĕк юханшыв çинче нихăçан та пӳтлĕ пĕве пулман. Çакна пула çанталăк шăрăх тăнă вăхăтсенче шыв типсе ларас патне çитет, колхозăн выльăх-чĕрлĕхсене шăварма та шыв салхал, пушар-мĕн пулас пулсан пушшех хăрушă.

Кăçал «Исаково» колхоз çак шыв çинче пысăк пĕве тăвать. Халĕ строительство материалĕсене хатĕрлесе çитернĕ. Плотина тунă хыççăн пĕвен таппи çур километра яхăн чăсăлса выртакан пулать.

## Рабочисемпе стахановецсем канмалли çуртсенче

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Древкомбинатри рабочисенчен иртнĕ уйăхра канмалли çуртсенче 3 çын, санаторисенче 5 çын пулнă. Май уйăхĕнче канма каякансен хисепĕ татах ӳсмелле. Çак кунсенче кăна Чăварлейри санаторине 2 çынна янă, çитес кунсенче тата Горький облаçĕнчи Сережински канмалли çурта 9 çын, Крымри курортсене 3 çын тухса каяççĕ.

Канма каякансенчен чылайăшĕсем стахановецсем. Сушильнăй цехри укладчицăсем Н. Вашуркинăпа А. Чимрова юлташсем вăтамран хăйсен нормисене икĕ хут иртторсе тултараççĕ, иккĕшĕ те пилотлă стахановкăсем, смена мастерĕ Бакулина юлташ производствăра паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕшĕн СССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн «Отличник социалистического соревнования» значокне илме тивĕçлĕ пулнă. Вĕсем пурте çитес кунсенче канмалли çурта каяççĕ.

Комбинатри завком иртнĕ çулта рабочисене тĕрлĕрен канмалли çуртсемпе санаторисене тата курортсене ярса 36,5 пин тенкĕ расходланă. Кăçал ку тĕлĕшпе тата ытларах расходлама пăхнă.

## Комсодсен ĕçне лайăхлатар

Пирĕн çĕршывра совет общественноçĕ государствăн заемĕсене сарас, перекет ĕçне вăйлатас тата ĕççыннисен пурнăçне коллективлă страхлас ĕçе анлăн хутшăнса пырать. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах государство кивçенлĕхпе перекет кассисен ĕçне пулăшакан комиссисем—комсодсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем хăйсем тавра финанс активне анлăн явăçтараççĕ, совет çĕршывĕн финанс тĕрекне çирĕплетессишĕн кĕрешççĕ.

Пирĕн республикăра чылай комсодсем хăйсен ĕçĕнче аван тĕслĕхсем кăтартса параççĕ. Хĕрлĕ Чутайри машинно-тракторнăй станци çумĕнче комсод председателĕ К. М. Игриванов юлташ активлă ĕçленине пула кунта рабочисемпе служащисем «Виççĕмĕш пятилеткăн (виççĕмĕш кăларăм) заемне» пурте пĕр харăс çырăнса заем укçине ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пухса çитернĕ. Комсодра ĕлекенсем заем облигацийĕсене яланах тĕрĕслесе тăраççĕ.

Янтиково ялсоветĕнчи (Елчĕк р.) комсод председателĕ И. О. Портнов юлташ та ĕççыннисем хушшинче заем сарас ĕçе аван йĕркеленĕ. Ку ялсоветра ĕçлеме пултаракан колхозниксемпе единоличниксем пурте заем çырăнса илнĕ. Çырăннă заем укçине октябрĕн 20-мĕшне пĕтĕмпех пухса çитернĕ. Ялти комсод заем уполномоченнăйĕсене активлă пулăшать. Ĕççыннисем заем облигацисем тăрăх выляса илнипе илменнине финанс ĕçĕнчи активистсем часах тĕрĕслесе тăраççĕ.

Шупашкарти пединститутри комсод та заемсем сарас ĕçе çулленех ăнăçлăн туса пырать: заем укçине вĕсем яланах вăхăтра пухаççĕ, çĕнĕрен килнĕ çынсене заем çырăнса илме вăхăтра пулăшаççĕ. Комсод председателĕ Каминцев юлташ вырăнти комсодсене тĕрĕслес ĕçре перекет кассине активлăн пулăшать.

Анчах комсодсем пур çĕрте те çавăн пек ĕçлемеççĕ-ха. Акă тĕслĕхсем. Октябрьски районри Утăскасси ялсовет председателĕ Михайлов юлташ комсода хăй ертсе пырать. Çапах та вăл комсод ĕçне вăйлатма пĕрре те тăрăшмасть. Комсод членĕсене те пĕлмест. Çавна пула ĕнтĕ ялсоветĕнче заем укçине пухас плана 70 процент çеç тултарнă.

Çĕмĕрлери райкомсод (председателĕ Носков юлташ) 1940 çулта пĕр лару та ирттермен. Ку районра колхозниксемпе единоличниксем хушшинче заем укçи пухассине пурнăçа кĕртеймен. Рабочисемпе служащисем хушшинче подписка суммипе малтан çырăннă хисеплерен чылай чакнă пулнă. Райкомсод çак çитменлĕхсене пĕтересшĕн кĕрешмест. Çакăн пек çитменлĕхсем пытти райкомсодсен ĕçĕнче те пур.

Хальхи вăхăтра финанс орăнăсен, партипе совет организацисен вырăнсенчи комсодсен ĕçĕсене вăйлатас тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлемелле.

Комсодсем халăх хушшинче заем сарас, перекет тата коллективлă страховани ĕçĕсене вăйлатас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Комсодсем заемсем çырăнтарас ĕçре перекет кассисене активлăн пулăшаççĕ, заем укçине вăхăтра пухас, вылявсене тĕрĕслес ĕçсене пуçарса пыраççĕ. Заемсем сарас, вкладсем пухас тĕлĕшпе перекет кассисем мĕнле ĕçленине, вĕсем заем тытăнсемпе вкладчиксем хушшинчи ĕçе епле организациленине, госстрах орăнăсем ĕççыннисен пурнăçне коллективлă страховани тăвас енĕпе мĕнле ĕçленине комсодсем яланах обществăллă контроль туса пыраççĕ.

Комсод вăл — пысăк вăй. Комсодсем финанс ĕçĕн çав виçĕ отраслисене маллала илсе пыраççĕ. Комсодсен ĕçĕсене ял, хула, район Совĕчĕсем сумĕнче пĕтĕçтерсе тăраççĕ. Комсодсенче предприятисемпе учрежденисенчи профессиллĕ союзсен вырăнти комитечĕсен, колхозсемпе промартельсен, партипе комсомол организацисен, стена хаçачĕсен представителĕсем тата финанс ĕçĕнчи чи лайăх активистсем пулмалла. Предприятисемпе учрежденисенчи комсодсене профсоюз орăнăсем ертсе пыраççĕ. Çавăн пекех тата вырăнти комсодсене райкомсодсен ертсе, тĕрĕслесе тата пулăшса пымалла.

**А. МИХАЙЛОВ.**

# Çамрăк геологсен пуçарăвне анлăн сарса ярассишĕн

Çĕмĕрле районĕнчи пионерсем — çамрăк геологсем район территорийĕнчи çĕр айĕнчи пуянлăха тĕпчесе пĕлме тытăнни—питĕ паха пуçару пулса тăрать. Ку пуçарăва пур çĕрте те анлăн сарса пымалла, вăл пире, вырăнти промышленность работникĕсене, халиччен палăрмасăр выртнă чĕртаварсен çĕнĕ те пуян резервисене шыраса тупма пулăшать.

Пирĕн социализмла тăван çĕршывăн вырăнти промышленноçĕ валли чĕртаварсем нумай кирлĕ. Чăваш республикин çĕрĕ пуян, республика территорийĕнче ку тарииччен эпир пырса тĕкĕнмен пурлăхсем нумай. Вĕсене тĕпчесе пĕлмелле, çав пуянлăхпа усă курмалла. Вăл пире ĕççыннисем валли кулленлĕ кирлĕ таварсем ытлăн-çитлĕн туса кăларма пулăшать. Партипе правительство геологи ĕçĕ валли укçа-тенкĕ нумай параççĕ. Геологи ĕçне хальхи вăхăтра нихăçанхинчен те анлăн та пысăккăн туса пыни кирлĕ.

Вырăнти чĕртаварсен куллен кирлĕ товар тата продовольстви туса кăларас тĕлĕшпе партипе совет организацисем, вырăнти промышленность работникĕсем пысăк ĕçсем туса иртереççĕ. Çак ĕçе пионерсем, шкул ачисем, çамрăк геологсем активлăн хутшăнни пит те пысăк пулăшу.

Çуллахи каникул пуçланиччен вăхăт нумай юлмарĕ. Çавна май эпĕ çакна каласшăн: шкул ачисем, пионерсем! Испытанисене лайăх хатĕрленĕр, пур предметсем тăрăх та «отлично» тата «хорошо» палласем илессишĕн хастарлăн кĕрешĕр! Каникулра хăвăр вăхăта лайăх ирттерĕр. Уçă сывлăшра, хĕвел ăшшинче ытларах пулăр, ӳт-пĕве, сывлăха çирĕплетĕр. Походсем, экскурсисем, разведкăсем туса ирттерĕр, район, колхоз çĕрĕ çинчи, вăрманти, сăртсенчи, çырмасенчи пуянлăхсене тĕпчесе пĕлĕр, сăнавлă ĕçсем туса пăхăр. Çакă вăл сире çутçанталăк пуянлăхĕпе паллашма, хăвăрăн пĕлĕве пысăклатма нумай пулăшĕ.

ВЛКСМ Чăваш обкомĕн бюровĕ Çĕмĕрлери çамрăк геологсен пуçарăвне вырлаç. самрăк геологсен кружокĕсене пур çĕрте те организацилеме хушрĕ. Вырăнти промышленность предприятийĕсен руководителĕсем çамрăк геологсене кулленех пулăшса пыма тивĕç. Инженерсемпе техниксен, мастерсен геологи кружокĕсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлемелле, вĕсене канашсем, сĕнӳсем, кăтартусем парса пулăшмалла. Предприяти руководителĕсен те çамрăк геологсен кружокĕсенче час-часах пулас пулать, вĕсене лайăхрах ĕçлеме мĕн кирлĕ, çавсене парса тăмалла.

Чăваш АССР вырăнти промышленност Халăх Комиссариачĕ республикăри мĕнпур пионерсене, шкул ачисене, учительсене, ачасен техникăллă станцисене, комсомол организацисене Çĕмĕрлери пионерсен — çамрăк геологсен пуçарăвне анлăн сарса пыма чĕнет. Вăл пире вырăнти чĕртаварсен пысăк резервисемпе ресурсĕсене шыраса тупма пулăшать.

**П. ВАСИЛЬКОВ.**
Чăваш АССР вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕ.

## Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç

Октябрьти Социализмлă Аслă революци пуличченхи вăхăтра чăваш халăхĕ хушшинче хутла пĕлекенсен хисепĕ 18 процент кăна шутланнă. Хĕрарăмсем хушшинче вара хутла пĕлекенсем çукпа пĕрех пулнă. Унтанпа ĕнтĕ, коммунистсен партийĕпе совет правительстви тăрăшпипе, хутпĕлменлĕхе, патша саманинчен юлнă çав инкеке, пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Чăваш республикинче хальхи вăхăтра, 18 çултан пуçласа 49 çула çитнĕ çынсене илсен, хутла пĕлекенсен хисепĕ 97,3 процент шутланать.

Çитĕннисене хутла вĕрентес тĕлĕшпе, çапла ĕнтĕ, пысăк ĕçсем туса иртернĕ. Анчах ку ĕçе эпир туса çитереймен-ха. Республикăра хутла пĕлменнисен хисепĕ, районри çутăç пайĕсем панă сведенисем тăрăх, паянхи куна 10.439 çын шутланать, вĕсенчен 9.228 çын вĕренеççĕ. Çавăн пекех хутла сахал пĕлекенсен хисепĕ 18.498 çын шутланать, вĕсенчен 14.626 çын вĕренеççĕ. Кăçалхи çул хутла сахал пĕлекеннисене 2.107 çын вĕрентсе кăларнă, хутла сахал пĕлекеннисен хисепне 1.138 çынна куçарнă. Çак шифрăсенчен вĕренĕве явăçтарманнисен хисепĕ халĕ те пысăкки курăнса тăрать. Вĕсене пурне те çывăх вăхăтрах вĕренĕве хутшăнтармалла.

Чăваш республики кăçалхи çул хутпĕлменлĕхе пĕтерсе çитерес задача лартнă. Ку тĕлĕшпе республика Мордва Автономлă Советлă Социализмлă Республикипе ăмăртса ĕçлет. Çак ăмăртура мала тухассишĕн çине тăрса ĕçлес пулать.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, чылай учительсем хутла пĕлменнисене тата хутла сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕçре ырă тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Шупашкарти учительсенчен — Уханова, Павлова, Панова тата Рассохина юлташсем вăя хурса ĕçлеççĕ. Шупуçĕнчи (Сĕнтĕр р.) учительница Яшмолкина юлташ юлашки çулсем хушшинче çитĕннисене 300 çынна хутла вĕрентнĕ. Çĕрпӳри учитель А. Яковлев юлташ 4 çул хушшинче допризывниксене 170 çын ытла вĕрентсе кăларнă. Мăн Елчĕк ялсовет исполкомĕн (Елчĕк р.) председателĕ И. Портнов юлташ хутла пĕлмен 11 çынна хăй вĕрентет. Кун пек лайăх тĕслĕхсене татах та илсе кăтартма пулать.

Анчах та хăшпĕр районсенче хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе тĕрĕссипе ăнланса илеймен-ха. Сăмахран, Пĕрес районĕнче январь уйăхĕ иртнĕренпе хутла пĕлменнисем хушшинче ĕçлеме пачах пăрахнă. Улатăр, Калинински, Кувакино, Красноармейски районсенче хутла пĕлменнисенчен 50 процент кăна вĕренеççĕ. Хăшпĕр районсенчи çутăç пайĕсенче ку ĕçе çитĕннисен шкулĕсен инспекторĕсем çине кăна хураççĕ. Ун пек çĕрте шкул инспекторĕсем çак ĕç çине сахал çăвăрăнса пăхаççĕ. Кун пек çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес пулать.

РСФСР Çутăç Халăх Комиссариачĕ апрель уйăхĕнче хутла пĕлменнисемпе хутла сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕçе çуллахи вăхăтра та пĕр чарăнмасăр туса пырасси çинчен приказ кăларчĕ.

Ку приказа пурнăçа кĕртесси çутăç орăнăсен тата мĕнпур обществăлла организацисен ĕçĕ пулса тăрать. Хальхи вăхăтра вĕренĕве хутшăнтарнисене вĕрентсе кăларассине организацилемелле тата вĕренĕве хутшăнман пулнисене пурне те вĕрентме тытăнмалла.

Çитĕннисене вĕрентес ĕçре çутăç орăнăсене комсомолпа профсоюз организацисем тăтăшах пулăшса пыни кирлĕ. Çавăн пекех районри хаçатсен те ку ĕçе тăтăшах çутатса пырас пулать.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе валли бюджет тăрăх паракан укçа-тенкĕне усă курасси те япăх пырать-ха. Иртнĕ çулта пĕтĕм республикипе ку ĕçе валли панă укçапа 68,9 процент кăна усă курнă. 1941 çулти пĕрремĕш кварталта та пĕтĕм республикипе 15 процент çеç усă курнă.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе çуллахи вăхăтра та вăйсăрлатма юрамасть. Ку ĕçе хальхи вăхăтра пушшех те вăйлатмалла. Обществăллă организацисем çине тăрса ĕçе тытăнни кирлĕ. Профсоюзсемпе комсомол организацийĕсен çак ĕçре чи малти ретре пымалла. Учительсем те тата ытларах ĕçе хутшăнни кирлĕ. Колхоз правленийĕсемпе ялсовет исполкомĕсен çитĕннисене хутла вĕрентес ĕçе çуллахи вăхăтра та туса пыма кирлĕ условисене пурне те туса памалла. Вĕренме тивĕçлисене шкула пĕр сиктермесĕр çӳретесси çине уйрăмах çавăрăнса пăхас пулать.

**Ф. ПЕТРОВ.**

# Шкул ачисен çуллахи каникулне ирттерме хатĕрленесси

Кĕçĕн классенче вĕренекенсем çитес кунсенче çуллахи каникула каяççĕ. Вĕсем хыççăн асларах классенче вĕренекенсем те каникула каяççĕ.

Çуллахи каникул вăхăтĕнче шкул ачисен кануне мĕнле оранизацилемелле? Çак ыйту партипе комсомол, профсоюз организацисене тата халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен орăнсене халех питĕ хытă интереслентермелле. Анчах та халĕ тивĕçлĕ организацисем каникул вăхăтĕнче шкул ачисен кануне лайăх йĕркелес тĕлĕшпе ĕçе çине тăрса тытăнни курăнмасть-ха. Хула совечĕн исполкомĕн çутăç пайĕ кăçал та, иртнĕ çултисем пекех, Ильинкăра (Сĕнтĕр районĕ) пионерсен лагерĕ уçать. Лагерьте виçĕ смена хушшинче 300 ача пулать. Кунсăр пуçне республикăри лагерьте, Каршлăхри санаторинче, районсенче уçакан лагерьсенче çĕршер ача канаççĕ.

Анчах та ку çителăклĕ мар. Шкул ачисен кануне лайăх организацилес пулсан, нумай ĕçсем тумалла.

Каникулсем пуçлансан урамсенче футболла тата волейболла вылякан ачасене курма пулать. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вĕсене валли физкультура площадкисем çук. Кăçал çакăн пек ан пултăр тесен, кашни шкулăн хăйĕн физкультура площадкисем пулмалла. Площадкăсем кăна мар, физкультурăпа спорт вăйăнне сарма кирлĕ япаласем те çителĕклĕ пулмалла. Çапла пулин те халĕ çаксем пĕри те çителĕклĕ мар. Шупашкарти шкулсенех илĕпĕр. 6-мĕш номерлĕ тата 1-мĕш номерлĕ шкулсен площадкисенче кашни кăсхинех (занятисем çук чухне) ачасем мячпа выляççĕ. Анчах вĕсем хăйсем тĕллĕн хăтланаççĕ, физкультурăпа вĕрентекенсене ачасем вылянă çĕрте курма çук. Ирĕклĕ спорт общественнăй те шкулсене сахал пулăшаççĕ, вĕсем хăйсен физкультурникĕсене шкулсенче футбол, волейбол тата ытти тĕрлĕ вăйăсене йĕркелес ĕçе хутшăнтармаççĕ. Нимĕн йĕркесĕр тапăртатни физкультура мар вăл; кашни шкулта лайăх, пĕлсе йĕркеленĕ футбол, волейбол командисем кирлĕ. Çакна организацилессине комсомолăн пуçармалла. Анчах та ВЛКСМ Шупашкар горкомĕ кун çинчен шухăшламасть-ха. Каникул вăхăтĕнче футбол, волейбол тата ытти вăйăсем тăрăх шкулсен ăмăртăвĕсене ирттерме пулать, апла пулсан ăна халех хатĕрленмелле.

Хулара ачасен кану тата культура паркĕ пур. Хăçан уçăлать вăл, никамшăн та паллă мар. Халĕ парка йĕркене кĕртес тĕлĕшпе никам та нимĕн те тумасть. ВЛКСМ горкомĕн парка ачасене чăннипех те савăнса канмалли, вăхăта культурăллă ирттермелли вырăн тăвассишĕн тăрăшмалла.

Малтанах аса илни çиенлĕ мар: ачасен Атăл çинчи купальнине кам тăвать? Иртнĕ çулсенчи пек ăна июль уйăхĕн вĕçĕнче, çитменнине тата кĕпе çумалли вырăнпа юнашар туса лартаççĕ-и тен? Купальня—кирлĕ ыйту, вăл ачасем хушшинче шыв спортне аталантарма пулăшмалла.

**Р. Ш.**

## Советсен хуçалăхĕнче йĕркелĕх пулмалла

ЕТĔРНЕ. Мăн Шемертен ялсоветĕнче совет хуçалăхне юхăнтарса янă: ялсовет исполкомĕн тата сессисен протоколĕсене вăхăтра çырмаççĕ, решенисене çиелтен, ячĕшĕн кăна йышăнаççĕ, ĕç хучĕсем ăçта пăхнă унта выртаççĕ. Ялсовет исполкомĕн секретарĕ Павлов юлташ совет хуçалăхне тивĕçлипе тытса пыман, хăйне шанса панă ĕçшĕн ответлăха туйман пирки 1940 çулта ялсовечĕн пĕрремĕшпе çиччĕмĕш сессисен протоколĕсене çухатнă.

Ялсовет исполкомĕн председателĕ Виноградов юлташ хăй ертсе пыракан ялсовет хуçалăхĕпе пачах интереслемест. Канцелярийнче пĕтĕмпе те икĕ сĕтел те икĕ пукан. Урăх нимĕн те çук. Кунта килнĕ çынсем ура çинчех тăраççĕ. Урайне сайра-хутра кăна çаваççĕ. Стенисене эрешмен картисемпе «капăрлатнă», маччи хуралса кайнă.

Ядрино ялсовет исполкомĕн шкапĕсенче те 4—5 сулхи делосемпе документсем саланса выртаççĕ. Вĕсене йĕркелес тĕлĕшпе ялсовет исполкомĕн председателĕ Архипов юлташ нимĕн те тумасть.

Ялсовет исполкомĕ иртнĕ çулта библиотека вырнаçнă çурта колхоза тырă склачĕ тума панă.

Ялсовечĕсенчи ĕç хучĕсене, делосене архивра сыхласа усрасси ответлă ĕç пулса тăмалла. Анчах ку ĕçе районри чылай ялсоветсенче тивĕçлипе организацилемен-ха. Хăшпĕр чухне шкапсемне сĕтелсене питĕрмесĕр хăварнисем те пулкалаççĕ. Унтан та ытларах, занятисем пĕтнĕ хыççăн ялсовет канцелярийнче час-часах пĕр çын та юлмасть.

Совет хуçалăхĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе райсовет исполкомĕ чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Совет хуçалăхне мĕнле йĕркелесе пынине кашни ялсоветрах тĕрĕслесе тухса, тĕрĕслӳ результачĕсене ялсовет исполкомĕсен ларăвĕсенче сӳтсе-явнă, ялсовет исполкомĕн секретарĕсен семинарне ирттернĕ.

**П. СИЛИВЕСТРОВ.**

## Ялсовет сессийĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Çак кунсенче Янкас ялсовечĕн сессийĕ пулса иртрĕ. Сессире вырăнти бюджета пурнăçланă çинчен тата трахработницăн пĕрремĕш кварталти ĕçĕсем çинчен сӳтсе-яврĕç.

Сесси вырăнти бюджета пур статьясем тăрăх та тултарса пырас, трахома чирне тĕпчипех пĕтерес тĕлĕшпе тата ытти ĕçсем пăлăртса хăварчĕ.

**П. РОМАНОВ.**

# Снайпер Ковкин

Батальон командирĕ вырнаçнă землянкăна кĕтмен çĕртен пысăк пӳллĕ, яштака боец кĕрсе тăнă. Ун сийĕнче ăшă куртка, çемçе çĕнĕ кăçатă, мулахай пулнă. Вăл пăхма çамрăк пулсан та çулĕпе вăтăралла пуснăскер темелле. Унăн питçăмартисем хĕрлĕ хăмач пек йăлкăшнă, икĕ куç шăрçисем çĕмĕрт сырлине аса илтернĕ.

— Эпĕ снайпер,—тенĕ вăл комбата.

— Ну вара, мĕн каласшăн унпа, ăçтан килнĕ эсир, мĕншĕн йĕркеллĕ рапортламастăр,—сассине хăпартнă капитан Касимовский.

— Эпĕ Ленинградран, доброволец, — хăюллăн ответленĕ боец. Унтан вăл полк штабĕнчен парса янă хут таткине комбата тыттарнă.

— Аван, аван, питĕ лайăх, ларăр сак çине,—тĕллесе кăтартнă комбат хыр турачĕсенчен кушаласа тунă «диван» çине кăтартса. Çав вăхăтрах хăй йăлкăшса çунакан çурта еннелле пĕшкĕнсе штабран çырса янă ĕçлĕ хута вуламa пуçланă.

— Батальон управленийĕн ячейкинче ĕçлеме тивет сире, эпĕ ăçта—эсир те çавăнта пулатăр,—татăклă ответ панă ăна капитан ĕçлĕ хута вуласа тухсан. Çапăçу вăхăтĕнче лайăх снайперсен командирсене тăшманран шанчăклă сыхласçĕ. Çавăнпа та çирĕп сывлăхлă, хăюллă боец Ковкина комбат хăйне пĕрле хăварма шут тытнă. Ăна вăл часах снайперсен винтовкине тупса панă.

Кирилл Ковкин çĕнĕ винтовкăна алла илнĕ те приборсене тĕрĕслеме, затворне шăлт-шăлт тутарса уçса хупнă. Унăн пуçне винтовка мĕнле пенине тĕрĕслес шухăш килсе кĕнĕ.

— Мана мишеньсем кирлĕ,—ыйтнă вăл комбатран.

— Мĕн тума?—тĕлĕннĕ капитан.

— Винтовка мĕнле пенине тĕрĕслесшĕн эпĕ...

— Чи лайăх мишеньсем — белофинсем, анчах тĕл перĕр,—хулпуççинчен лăпкаса йăпатнă комбат снайпера.

— Питĕ лайăх, çапăçура тĕрĕслĕп апла,—килĕшнĕ Ковкин.

* * *

Çинçе те вăрăм уçланкă. Уçланкăн ку енчи хыр вăрманĕнче—эпир, лешъенче—белофинсем. Противник çак уçланка пĕтĕмпех пралуксемпе карса пĕтернĕ, гранит надолбăсем лартса тултарнă, кашни утăмрах юр ăшне минăсем чиксе лартнă.

Кирилл Ковкина белофинсен снайперĕсене, наблюдателĕсене пĕтерме приказ панă. Вăл часах уçланкă еннелле хырăмпа шунă. Вăрман хĕрринчи пĕр хулăм йывăç тĕлне пырса выртать те снайпер хăйĕн винчĕн куçĕсемпе тăшман позицийĕсене сăнама пуçлать. Ун патне комбат упаленсе шăвать.

— Ну, мĕнле, «мишеньсем» пур-и?—ыйтать вăл унтан.

— Шăп, ан шавлăр!—пӳрнипе юнать Ковкин. Вăл çав вăхăтра питĕ майлă «мишень» тупнă мĕн. Каркаланчăк пралуксем патне пирĕн позицине сăнама тесе пĕр белофинн хырăмпа шуса пынă. Ковкин ăна часах сăнаса илет те, майлăн тĕллесе курока еринпен пусать. Пĕр самантрах пăшал сасси вăрмана сурса каять, снайперăн пульли белофинн çамкине çурса та пăрахать.

— Акă пăшална тĕрĕслерĕн те, лайăх ĕçлетĕн,—чĕререн юратса хулĕнчен лăпкать ăна комбат.

* * *

Ковкинăн паттăрла ĕçĕсем Маннергейм линине çĕмĕрсе тăкнă чух пуçланса каяççĕ. Касимовский батальонĕ вăл вăхăтра çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тăвать. Вĕсенчен чи палли—чуллă сăртра тăшмана çĕмĕрсе тăкни. Пĕр сĕм вăрманта чуллă сăртра батальон тăшман подразделенийĕсене тĕпренех çĕмĕрсе тăкса, сăрт таррине хĕрлĕ ялавсем лартать. Чуллă сăрт — питĕ паллă та кирлĕ стратегиллĕ вырăн пулнă. Çавăнпа та белофинсем çак сăрта каялла илесшĕн татах çапăçма шут тытнă, Вĕсем чеелесе красноармеецсене хирĕç контратакăна кĕме хăтланаççĕ. Белофинсем пур енчен те ушкăнăн-ушкăнăн тухса, батальон еннелле «Сдаемся, не стреляйте!»—тесе утаççĕ. Пирĕн боецсемпе командирсем тăшманăн чеелĕхĕне хаярлăхне лайăх вĕренсе çитнĕ. «Сдаемся» тенине хирĕç вĕсем «пăталăрсене пăрахăр», — тесе ответлеççĕ. Белофинсем çĕлĕкĕсене, каскисене, противогазĕсене юр çине çĕклесе çапаççĕ, айвансем мĕн хăтланнине пăхсан чăн та парăнаççĕ темелле, анчах шереметсем винтовкисене, автомачĕсене пăрахас вырăнне тата хытăрах чĕмăртаса тытаççĕ.

— Огонь по врагу!—кăшкăрать Касимовский.

Вăл вăхăтра Ковкин пăшалне авăрласа пĕр йывăç хыçĕнче финсен офицерĕсене тĕллесех выртнă иккен. «Огонь» тенине илтсенех вăл кĕрс! те кĕрс! тутарма пуçлать. Шăп тăваттă перçе ярать вăл тăшман еннелле, унăн кашни пульли тĕл лексе тăвать белофинпа юр çинĕ çĕклесе çапать. Унăн куçĕ тĕлне лекнĕ пилĕкмĕш белофинĕ тарма хăтланать, анчах хăтăлаймасть, снайпер пульли ăна та çитсе лекет.

Паллах, комбат «огонь» тесе кăшкăрсанах Ковкинпа пĕр харăс пулеметчиксемпе стрелоксем те тăшман çине вут тăкма пуçлаççĕ. Улталас шутпа красноармеецсем çине çăтăхса килнĕ тăшман урисене сĕтĕрсе аякка каяймасть: вĕсенчен нумайĕшĕ хыр вăрманĕнче юн юхтарса юласçĕ. Чĕрĕ юлнисем каялла чакса çĕнĕ позицисем йышăнаççĕ.

Батальон каялла чакакан тăшмана хăваласа чылай малалла каять. Финсем хĕлле те шăнман лачака хĕррипе сапаланнă чул муклашкисем хыçне пытанса пеме тытă



«Рыбинск тинĕсĕнче». УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: шыв илнĕ вырăнтан тарса тухма ĕлкĕреймен лоç сулă çинче çăлăнса юлать.
М. Королев фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

## Совет Союзĕн тĕнчери çĕршывсен Будапештри ярмаркинчи павильонĕн çитĕнĕвĕ

БУДАПЕШТ, майăн 10-мĕш. (ТАСС). Тĕнчери çĕршывсен Будапештри ярмаркинче курма пыракансен тимлĕхĕ, халичченхи пекех, совет павильонĕ çинче.

Çак кунсенче яланах совет павильонине курма пыракансем питех те нумай, вĕсем Совет Союзĕнчи хуçалăхпа культура пурнăçĕн çитĕнĕвĕсемпе тĕплĕн паллашаççĕ.

Тĕнчери çĕршывсен ярмарки, тесе сыраççĕ Венгрири хаçатсем, хăйĕн çитĕнĕвĕшĕн пуринчен малтан совет павильонне тав тума тивĕçлĕ. Сăмахран, «Эшти курир» хаçат çапла сырать: «ирхине ирех, ярмăрка уçăличчене хăпка патне нумай халăх пухăнса тăрать. Совет павильонĕ умĕнче çынсем уйрăмах нумай пухăнаççĕ, унта кĕрес тесен, нумай вăхăт хушши черетре тăма тивет. Еçлемелли кунсенче те ирхине 10 сехетре совет павильонĕ умне нумай пин çын пухăнса тăрать».

БУДАПЕШТ, майăн 12-мĕш. (ТАСС). Енер тĕнчери çĕршывсен Будапештри ярмаркинче халăхăн тĕп тимлĕхĕ совет павильонĕ çинче пулнă. Унта кĕрсе курас текенсен хисепĕ пĕрмаях ӳсе пынă. Малтанлăха илнĕ сведенисем тăрăх, иртнĕ кунсем хушшинче совет павильонĕнче 800 пин çын ытла пулнă. Пур экспонатсене те юратса пăхаççĕ. Кĕнекесемпе уйрăмах интересленеççĕ. Советсен Дворецĕн макечĕ пурне те савăнтарса тĕлĕнтерет. Фотографсем пуринчен малтан çак макет патне пыраççĕ, тăрринче Ленин скульптури тăракан çак чаплă та аслă сурта ӳкерсе илме тăрăшаççĕ. «ИС» тата «ФД» локомотивсен моделĕсем умĕнче те çынсем питĕ нумай.

БУДАПЕШТ, майăн 12-мĕш. (ТАСС). Паян Будапештра тĕнчери çĕршывсен ярмарки хупăннă. Юлашки кун совет павильонĕ умĕнчи черет иртнĕ кунсенчи черетсенчен нумай пысăкрах пулнă. Паян Будапештри темиçе шкулта вĕренекенсем ярмаркăна коллективлăн пырса курнă. Шкул ачисенчен, сире ярмаркăра пуринчен ытларах мĕн кăмăла кайрĕ тесе ыйтсан, вĕсем пурте пĕр сасăпа çакăн пек ответ панă: совет павильонĕ, тенĕ.

## Америкăри хаçатсем Англипе Америка хушшинчи отношенисем çинчен

НЬЮ-ЙОРК, майăн 12-мĕш. (ТАСС). Америкăри хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: майăн 14-мĕшĕнче Вашингтонра панамерикански союз совечĕн ларăвĕнче Рузвельт сăмах тухса калать. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, правительство руководителĕсем суту-илӳ суднисене хӳтлесе сӳресси çинчен тăракан ыйту тăрăх Рузвельт сăмах тухса каличчен конгресра сасăлас мар, тесе йышăннă. Сенатор-республиканец Тоби çапла каланă: юлашкинчен эпĕ хамăн конвой тума чарасси çинчен калакан резолюцине сенатра сасăлаттарма шутлатăп, тенĕ.

«Балтимор сэн» хаçат умстатьяра çапла сырать: «Америкăн пысăк пулăшăвĕсĕр, кирлĕ вырăна чăннипех те илсе çитернĕ пулăшусăр Англине йывăр килет». Хаçат Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене Англине пулăшу парас ĕçре малалла кайма, Англине продовольствипе хĕçпăшал турттарса каймалли çулсене кирек мĕнле хакпа пулсан та сыхласа хăварма чĕнет.

«Союзниксене пулăшнипе Америкăна хӳтлес тĕлĕшпе ĕçлекен комитет» çĕршывра чрезвычайлă положени туса хума, президент полномочийĕсене вăрçă вăхăтĕнчи полномочисем таранах вăйлатма ыйтать. Комитет Британи утравĕсем патне каймалли снабжени линийĕсене сыхлас ĕçре Америка сывлăш вăйĕсемпе тата тинĕс-çар вăйĕсемпе усă курма чĕнет, çавăн пекех тата конвой ĕçĕнче Америка хĕçпăшалĕсемпе усă курма ыйтать.

## Гесс çухални çинчен национал-социалистла парти руководстви официальнăй йĕркепе пĕлтерни

Германири информаци бюровĕ национал-социалистла парти руководствин официальнăй пĕлтерĕвне парать. Çав пĕлтерӳре çапла каланă: чирлĕ пулнă пирки самолетсене тытса пыма чарнă пулсан та, Гесс майăн 10-мĕшĕнче каçхине 18 сехетре самолет çине ларса Алгсбургран вĕçсе тухнă, çав вĕçĕврен вăл халĕ те тавăрăнман. Гесс хăварнă сырура, тенĕ пĕлтерӳре, «шухăшсен сыхăнăвĕ çук, çакă ĕнтĕ вăл ăс-тăн енчен пăтрашăнса кайни çинчен калать, Гесс ăсран тухнă пулĕ тесе шиклентерет». Гитлер Гесс адъютанчĕсене арестлеме приказ панă. Гесс, тенĕ малалла пĕлтерӳре, самолечĕпе пĕрле çĕре персе аннă пулмалла. (ТАСС).

## Профсоюзсен кросне тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илер

Майăн 18-мĕшĕнче профсоюзсен çуркуннехи массăллă кросĕ пуçланать. Çак массăллă кроса кăçалхипе тăхăрмĕш çул ирттереççĕ ĕнтĕ, кашни çулах вăл кроса ĕççыннисем пиншерĕн хутшăнаççĕ. Профсоюзсен кросĕ çăмăл атлетикăн çуллахи сезонĕпе пĕр вăхăтра, иккĕшĕ те пĕр кун пуçланаççĕ.

Кăçалхи сезонăн ăнăçлăхĕ çак кроса тĕплĕн хатĕрленсе ирттернинчен килет. Вăл кросс физкультура коллективĕсем тата спорт обществисем çуллахи сезона мĕнле хатĕрленсе кĕтсе илнине татса парать.

ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕ çак кунсенче спорт обществисен руководителĕсене тата профсоюзсен обкомĕсен председателĕсене чĕнсе канашлу ирттерчĕ. Унта профсоюзсен кросне ирттерме мĕнле хатĕрленсе пыни çинчен сӳтсе-явăрçĕ.

Канашлура кроса çителĕксĕр хатĕрленни палăрчĕ. Профсоюз организацийĕсенче тренировкăсене массăллăн ирттерме тытăнман. Кросс участникĕсен сывлăхне медицина енчен тĕрĕслесси те начар пырать. Шупашкар хулинчи организацисем те мухтанма пултарайманнине, медосмотр витĕр кунне 7—10 çынтан ытла тухмасть.

Профсоюзсен обкомĕсем районсенче ĕçсем мĕнле пынине пĕлмеççĕ. Кросра пулма миçе çын уйăрни палăлмар. Çакă ĕнтĕ кроса хатĕрленесси хăй тĕллĕн пулса пынине уççăнах кăтартса парать.

Çăнăх аваpтакан промышленноçри работниксен профсоюзĕн обком председателĕ Кормишин юлташ каланă тăрăх, Канашра 20 çын тăратма шутлаççĕ. Унта кроса татах та ытларах явăçтарма пулать, мĕншĕн тесен, Канашри элеваторта нумайăн ĕçлеççĕ. План тăрăх çак профсоюз обкомĕн 150 çын тăратмалла. Кормишин юлташ плана «мĕнле те пулин» тултарма шутлать. Тĕрĕссипе илсен, ĕçре нимĕн туни те çук.

«Большевик» тата «Учитель» спорт обществисем кроса ытти обществăсенчен лайăхрах хатĕрленеççĕ. Ку обществăсем кроса хатĕрленес тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем кроса пысăк пахалăхпа, ĕççыннисене ытларах явăçтарнипе ирттерме тăрăшаççĕ.

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен хулари комитечĕн председателĕ Журавлев юлташ каланă тăрăх, Шупашкарта кросс ирттерме икĕ дистанци хатĕрленĕ. Вăл дистанцисенче суд коллегийĕсем т. ыт. çынсене те уйăрнă. Хулара медицина кабинечĕ ĕçлет. Шупашкар хулинче майăн 18-мĕшпе июнĕн 8-мĕш кунĕсем хушшинче кроса 6—7 пин çынна яхăн хутшăнмалла.

Журавлев юлташ медицина кабинечĕсенче кирлĕ оборудовани сукки çинчен каларĕ.

Чăваш АССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссарĕн заместителĕ Рыжов юлташ кросс вăхăтĕнче медицина работникĕсем мĕнле ĕçлемелли çинчен чарăнса тăчĕ. Вăл медицина кабинечĕ валли кирлĕ оборудовани тупса хатĕрлеме пулни çинчен пĕлтерчĕ.

Смирнов юлташ (ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕ) профсоюзсен кросне хатĕрленес ĕçе вăйлатма кирли çинчен каларĕ.

Кросс пуçланас вăхăт нумай юлмарĕ. Профсоюз организацийĕсем тата спорт обществисем туса çитермен ĕçсем сахал мар. Çак ĕçсене кĕске вăхăтра пурнăçласа çитермелле. Профсоюзсен кросне пысăк пахалăхпа ирттересси — ярфсоюз тата физкультура организацийĕсен пысăк задачи пулса тăрать.

## Армян литературин Мускаври декади

### В. И. Ленин ячĕпе тăракан библиотекăри вечер

Армян литературин Мускаври декадин вечерĕсем пысăк çитĕнӳпе пулса иртеççĕ. Арменин нумай ĕмĕрсем каярах пуçланнă литературипе столицăри халăхăн тĕрлĕ сийĕсем паллашаççĕ. ССР Союзĕн В. И. Ленин ячĕпе тăракан государство библиотекинче майăн 12-мĕшĕнче декадăн виççĕмĕш вечерĕ пулнă. Вечера пынă çынсем армян поэзийĕн, прозин тата драматургийĕн представителĕсене — декада участникĕсене ăшшăн саламланă.

Вечера уçнă чухне каланă сăмахра библиотека директорĕ Яковлев юлташ Мускаври вулакансем армян литературипе калама çук интересленни çинчен каласа панă.

Филологи наукисен кандидачĕ Сурен Арутюнян армян литератури çинчен историллĕ обзор туса панă. Унтан армян литературине вырăсла куçаракансем армян литературин классикĕсен тата хальхи вăхăтри писательсен творчествипе паллаштарнă.

Вечер тĕлне В. И. Ленин ячĕпе тăракан библиотека ятарласах выставка организацилеттĕ. Унта «Армянская литература на языках народов СССР» раздел пысăк вырăн йышăнса тăрать.
(ТАСС).

## Кашни вулав çуртне — библиотека

Юлашки çулсем хушшинче РСФС Республикинчи ялсенче 30 пин вулав çурчĕ, культура çурчĕсем, ялсемпе колхозсенчи клубсем тунă. Хальхи вăхăтра ялсенчи вулав çурчĕсенче 8 миллион кĕнеке ытла, 2.500 яхăн киноустановка, 20 пин ытла радиоприемник шутланать.

Анчах та нумай вулав çурчĕсемпе клубсенче кирлĕ япаласем сахал-ха. Кĕнекесем, хаçатсем тата ыттисем те çителĕксĕр. РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ йышăннă решени тăрăх 1942 çулти январĕн пĕрремĕш тĕлне вулав çурчĕсенче пуринче те библиотекăсем организацилеççĕ. Библиотекăсенче 200—250 кĕнекерен кая мар пулать. Пур вулав çурчĕсем те центрта, облаççенче тата районсенче тухса тăракан хаçатсене, журналсене илсе тăмалла. 1941—42 çулсенче ялсенчи политпросвет учрежденийĕсене радиофикацилесе çитерме йышăннă.
(ТАСС).

## СССР Наркомюстĕнче

СССР Юстици Халăх Комиссариачĕ халăх сучĕсене товарнăй поездсем çинче хăйсен ирĕкĕпе ларса çӳрени çинчен калакан ĕçсене пилĕккунлă срокра пăхса тухма хушнă. Поезда стоп-кранпа хăйсен ирĕкĕпе (кирлĕ мар чухне) тытса чарни çинчен калакан ĕçсене те çаван пек срокрах пăхса тухма хушнă. Çак ĕçсене чугунçул транспортĕнчи линейнăй судсем пăхса тухмалла.

Товарнăй поездсем çинче хăйсен ирĕкĕпе ларса çӳренĕшĕн суд приговорĕ тăрăх пĕр çулталăк хушши тĕрмере хупса усрамалла тăваççĕ.

Поезда кирлĕ мар çинчех стоп-кранпа хăйсен ирĕкĕпе чарнăшăн, çак ĕçĕн характерне кура закон тăрăх татах та йывăртарах наказани памалла мар пулсан, пĕр çултан пуçласа виçĕ çула çити тĕрмере хупса усрамалла тăваççĕ. (ТАСС).

## ЕВРОПĂРИ, АФРИКĂРИ ТАТА АЗИРИ ВĂРÇĂ

### (Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Иртнĕ кунсенче **Англипе Германи хушшинчи фронтра** активлă вăрçă ĕçĕсем пулнă. Германи командованийĕн сводкинче çапла каланă: ыран майăн 11-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕн пысăк вăйĕсем Лондон çине пырса тапăннă. Çав каç çĕрĕпех Германи самолечĕсем Лондон çине тĕрлĕ калибрлă фугаслă бомбăсем пăрахнă. Германи бомбардировщикĕсен ытти соединенийĕсем çăмăл металсемпе моторсем тăвакан завод çине, çавăн пекех тата Англин кăнтăр пайĕнчи çар заводĕ çине пырса тапăннă.

Çавăн пекех Темза тинĕсе юхса тухакан вырăнти портсен сооруженийĕсем çине, Плимутри тата Англин кăнтăр-хĕвелтухăç çыранĕнчи портсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Ыран майăн 12-мĕш тенĕ чух çĕрле Кăнтăр тата Центральнăй Англири аэродромсемпе промышленноçлă объектсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Ыран майăн 11-мĕш тенĕ чух çĕрле, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англи сывлăш-çар вăйĕсем пуринчен ытларах Гамбург çине пырса тапăннă. Çак операцисенче Англи бомбардировщикĕсен пысăк вăйĕсем пулнă. Вĕсем суднăсем тăвакан верфьсем çине тата хулари промышленноçлă районсем çине бомбăсем пăрахнă. Англи авиацийĕн ытти соединенийĕсем ыран майăн 11-мĕш тенĕ чух çĕрле Бременпа Эмденри (Германия), Роттердамри (Голландия) портсем çине, çавăн пекех Берлинри хăшпĕр объектсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Авиаци соединенийĕсем çавăн пекех противникăн суту-илӳ тумалли суднисем çине пырса тапăннă. Противник çар карапĕсенчен пĕрин çине бомбăсем тĕлех пырса ӳкнине асăрханă. Кунсăр пуçне транспортлă икĕ суднăна сиен кӳнĕ. Англи бомбардировщикĕсемпе Германи истребителĕсем хушшинче сывлăшри çапăçу пулса иртнĕ.

Англин çыранри авиацийĕн соединенийĕсем противникăн транспортлă суднисем çине, Францири Ла-Рошель патĕнчен кăнтăр енчи Ла-Паллисри доксемпе нефтехранилищĕсем çине пырса тапăннă. Çыранри авиацин ытти соединенийĕсем Голландипе Дани çыранĕсем патĕнче противник суднисем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Ыран майăн 12-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Гамбург, Бремен, Эмден, Роттердам тата Эймейдн çине пырса тапăннă.

* * *

Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, **Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç** пайĕнче Итали бомбардировщикĕсем Англи карапĕсем çине пырса тапăннă, икĕ крейсера сиен кӳнĕ. Эгейски тинĕсре, тенĕ малалла сводкăра, Итали часĕсем Кей, Серифос, Сирос тата Миконос утравĕсем çине анса юлнă, çакăнпа вара Кикладски утравсене оккупацилесе пĕтернĕ. Германипе Итали авиацийĕ Суэц каналĕн зони çине татах тепĕр хут пырса тапăннă. Египетри оборона министерстви къларай коммюникере каланă тăрăх, бомбăсем пысăк сиен кӳреймен. Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш вăйĕсен командованийĕ къларнă коммюникере каланă тăрăх, Англи самолечĕсем Бенгази, Бенина, Дерна, Аджедаби, Триполи çине, пырса тапăннă. Аэродромсемпе гаваньсем çине, Германипе Италин пĕр çĕре пухăннă войскисем çине бомбăсем пăрахнă. Бенгазире, сăмахран, бомбăсене мол çине тата гаваньри ытти объектсем çине пăрахнă. Триполире темиçе бомба мол çине тĕлех пырса ӳкнĕ. Пĕр бомби электростанци çине ӳкнĕ. Англи авиацийĕ çавăн пекех тата Сицили утравĕ çинчи Катанипе Камизори аэродромсем çине пырса тапăннă. Германин çĕр çинче ларнă чылай самолечĕсене пĕтерсе тăкнă.

Тобрук районĕнче тата Соллум патĕнче артиллерипе патрульсен ĕçĕсем палăраççĕ. Рейтер агентствин Каирти корреспонденчĕ шутланă тăрăх, Ливипе Египет фронтĕнче вăрçă ĕçĕсем лăпланни çанталăк питĕ шăрăх тăнинчен те килет.

**Хĕвелтухăç Африкăра,** Абиссинире, вăрçă ĕçĕсем халиченхи пекех Амба-Алага секторĕнче сарăлса пыраççĕ. Англи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Англи самолечĕсем Амба-Алага форчĕ çине вăйлăн бомбăсем пырса пăрахнă, войскăсем хулана атакăлаççĕ. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Амба-Алага секторĕнче англичансен çĕнĕ атакине сирсе янă.

**«Таймс»** хаçатăн обозревателĕ Абиссинири лару-тăру çинчен çапла сырать: Римран приказ панă тăрăх Итали командованийĕ Абиссинири операцисене малалла тăсса пыма пур майсемпе те тăрăшать, Англин унти войскисене урăх çĕре илсе кайма парасшăн мар.

Абиссинири вăрçă кампанийĕн юлашки **тапхăрĕсем,** тет обозреватель, питех те йывăр, мĕншĕн тесен итальянецсем хăйсен вăйĕсене пырса кĕме йывăр, хӳтлеме çăмăл 3—4 районра пухса тăратнă.

* * *

Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш вăйĕсен командованийĕ къларнă коммюникере каланă тăрăх, майăн 11-мĕшĕнче ирхине Англи войскисем Рутба фортне (Иракăн хĕвеланăç пайĕнче) турттса илнĕ.

Юнайтед пресс агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хаббани районĕнче англичансем Ирак чаçĕсене Хаббани аэродромĕ патĕнчен каялла, Фелуджа (Багдад патĕнчен хĕвеланăç еннелле 50 километрта) тата Рамади (Багдадран çурçĕр-хĕвеланăç енче) сывăхĕнчи оборона позицийĕсем патнелле хăваласа янă. Англи войскисене малалла кайма чарас тесе, Ирак войскисем Евфрат юханшывĕ çинчи пĕвесене уçса ярса, Фелуджăпа Багдад хушшинчи айлăмсене шыв айне гунă, тесе пĕлтереççĕ.

Гавас-ОФИ агентстви Багдадран пĕлтернĕ тăрăх, Ирак командованийĕ къларнă коммюникере çапла каланă: фронтăн хĕвеланăç участокĕнче, Синельдебан районĕнче, противник йывăр положенине кĕрсе ӳкнĕ. Ирак артиллерийĕ противник позицийĕсене çине персе тăрать. Фронтăн кăнтăр участокĕнче, Басра районĕнче, немĕнле улшăнусем те пулман.

Англин Иракра кĕрешекен авиацийĕ, Англи сводкинче каланă тăрăх, Ирак войскисем турттса илнĕ аэродромсем çине тата ытти çар объекчĕсем çине бомбăсем пыра-пыра пăрахнă. Мосулри çар объекчĕсем çине, Амарăри, Дивaнири, Насирири, Гарагри казармăсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Майăн 12-мĕш. (ТАСС).

## Шупашкар хулинчи футболистсен пухăвĕ

Майăн 12-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи футболистсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура хулари чи ватă футболистсенчен пĕри К. Никитов юлташ пирĕн çĕршывра пĕтĕм халăх вăйăви—футбол мĕнле аталанса пыни çинчен доклад туса пачĕ.

Докладчик тата пренире тухса каланă юлташсем Чăваш республикинче, çав шутрах Шупашкар хулинче те футбол вăйăвине сарас ĕçри çитменлĕхсене нумай тупса палăртрĕç. Пирĕн футбол командисенче, футболистсем хушшинче халĕ те çирĕп дисциплина, культурăлăх, коллективлăх çитмест. Вăйă пынă чухне час-часах йĕркене пăсаççĕ, тепĕр чухне футбол вăйăвин хирĕнче хулиганла ĕçсем те пулаççĕ. Пирĕн хăшпĕр футболистсем вăйă техникине, мячпа выляма, пасовка тума вĕренес вырăнне ураран тапма, кăшкăрма, «противникне» суранлама тăрăшаççĕ. Кунашкал фактсем иртнĕ çулта пулса иртнĕ футбол матчĕсенче сахал мар пулнă.

Футболистăн пур енчен те культурăллă физкультурник пулмалла. Анчах Шупашкар хулинчи футболистсенчен нумайăшĕн ГТО значокĕсем çук, вĕсем мяча тапма пĕлниех физкультурник пулнине пĕлтерет, тесе шутлаççĕ иккен. Пухура футболистсен физкультурăпа спорт ĕçĕн республикăри тата Шупашкар хулинчи комитечĕсем те футболистсем хушшинче вĕрентӳпе воспитани ĕçне чăнласа организацилеме тăрăшни пулман. Кун çинчен В. Платунов юлташ каласа пачĕ.

Физкультура коллективĕсене спортинвентарĕсем тăратасси çинчен сăмах тапратнă май, физкультурăпа спорт ĕçĕсен республикăри комитечĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕç. Республикăри комитетăн спортинвентарьсем тăратас ĕçре кăна мар, тата ытти ĕçсенче те çитменлĕхсем пур пулсан та, комитет представителĕсем хăйсен айăпне пĕтĕмĕшпех ирĕклĕ спорт обществисем çине йăвантарма пăхрĕç.

Футбол командисем хулара юлашки çулсенче ӳсме мар, чакса пыраççĕ. 1937—38 çулсенче хулара футбол вăйăвин йĕркине пĕлсе вылякан командăсем 10 пулнă пулсан, кăçалхи сезонра пурĕ те 4 команда кăна. Çак факт хулари çамрăксене спорт ĕçне явăстарасси начар тăнине кăтартса парать.

Çакăнтан республикăри комитетăн та, хулари комитетăн та, çавăн пекех ирĕклĕ спорт обществисен совечĕсен те хăйсене валли вывод тумалла. Футбол вăйăвине аталантарасси, командăсене çирĕплетесси çинчен каласа чухне çамрăксене çак ĕçе хутшăнтарса вĕсене техникăна алла илнĕ футболистсем тăвассине яланах асра тытмалла.

## Ăча ашшĕ-амăшĕсем валли лекцисем

Чăваш республикинчи пионерсемпе октябрятсен центральнăй çурчĕ ача амăшĕсемпе ашшĕсене хăйсен ачисене воспитани парас ĕçре пысăк пулăшу пама пуçларĕ. Кăçал пионерсемпе октябрятсен çурчĕ ачасене воспитани парас, пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе ашшĕ-амăшĕсен мĕн тумалли çинчен чылай лекцисем туса ирттерчĕ.

Майăн 12-мĕшĕнче «Что Вас волнует в воспитании Вашего ребенка» тема тăрăх ыйтусемпе ответсен кăçĕ пулса иртрĕ. Çак ыйтусемпе ответсен кăçне ирттернĕ чухне шкулсенче, медицина енĕпе тата судра ĕçлекен работниксем пулчĕç.

## Академи театрĕн вырăс коллективĕ Çĕмĕрлере

Чăвашсен Государство Академи театрĕн вырăс коллективĕ виçĕмкун Çĕмĕрле хулине тухса кайрĕ. Майăн 14-мĕшĕнче «Неравный брак» ятлă пирвайхи спектакль лартса параççĕ. Театр Çĕмĕрле хулинче пурĕ 29 постановка лартса парать. Вăл шутра «Мачеха», «Без вины виноватые», «На бойком месте», «Воспитанница», «Замужняя невеста», «Лекарь по-неволе», «Простая девушка», «Сады цветут», «Мелкие козыри», «История одной любви» тата «Коварство и любовь» пьесăсене лартаççĕ.

Çĕмĕрле хулинче спектакльсем лартнă хыççăн Пăрачкавра тата колхозсенче те пуласçĕ.

## Охотăна çӳремелли срока тăсасси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ 1940 çулти апрелĕн 13-мĕшĕнче «Охотăна çӳремелли йĕркесем тата охота продукцийĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлении срокĕ тухнă. Çакна май Совнарком охотăна çӳремелли срока çĕнĕ йĕркесем кăлариччен тăсмалла тунă.

## Колхозсенчи кинофестиваль пуçланчĕ

Майăн 12-мĕшĕнче пĕрремĕш тура кĕрекен Улатăр, Кувакино, Вăрнар, Калинино, Елчĕк, Йĕпреç, Канаш, Шăхасан, Тăвай тата Пăрачкав районĕсенче колхозсенчи кинофестиваль пуçланчĕ. Çак районсене кинофестиваль ирттерме пулăшса пыма кино енĕпе ĕçлекен специалистсем кайнă.

Кинофестиваль вăхăтĕнче лайăх картинăсем кăтартаççĕ. Сăмахран, Пăрачкав районĕнче «Партийный билет», «Мужество», «Богдан Хмельницкий», «Ленин в 1918 году» т. ыт. картинăсене кăтартма тытăннă.

Колхозниксем кинофестиваль ирттернине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Вĕсем кинокартинăсем курма йышлăн çӳреççĕ.
Я. М.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКОЙ МЕЖРАЙБАЗЕ ЧУВАШПОТРЕБСОЮЗА

**требуются заведующие товарными складами.**

Оплата по госнормированию.

Дирекция.

3—3

**Чувашской республиканской конторе „Заготживсырье“**

требуются на постоянную работу:

**машинистка и дворник-сторож.**

Справляться по адресу: г. Чебоксары, Ленина, 31.

2—1 Заготживсырье.

***Управлению по делам искусств при СНК ЧАССР***

ТРЕБУЕТСЯ

**БУХГАЛТЕР-РЕВИЗОР**

Обращаться по адресу: Дом Советов, 2-й этаж, комната 218, телефон 2—42.

2—1

## РСФСР НАРКОМПРОСĔН УЛАТĂРТИ УЧИТЕЛЬСЕН ИНСТИТУЧĔ

Физикăпа математика тата чĕлхепе литература факультечĕн 1-мĕш курсне студентсем илесси çинчен

ПĔЛТЕРЕТ.

**(Чĕлхепе литература факультетĕнче икĕ отделени: а) чăваш чĕлхипе литературин тата ă) вырăс чĕлхипе литературин отделенийĕсем).**

Института вăтам шкул, рабфак, педучилище, çавăн пекех тата вăтам шкулăн IX-мĕш класне вĕренсе пĕтернĕ граждансене, 17 çултан пуçласа 40 çула çитнисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрекенсем пурте çак предметсемпе экзамен тытаççĕ:

а) чăваш чĕлхипе литературин отделенине кĕрекенсем—чăваш чĕлхипе, чăваш литературипе, вырăс чĕлхипе, вырăс литературипе, СССР халăхсен историйĕпе тата географипе;

ă) вырăс чĕлхипе литературин отделенине кĕрекенсем—вырăс чĕлхипе, вырăс литературипе, СССР халăхсен историйĕпе тата географипе;

б) физикăпа математика факультетне кĕрекенсем—вырăс чĕлхипе, вырăс литературипе, математикăпа тата физикăпа.

Чăваш чĕлхипе, вырăс чĕлхипе, математикăпа экзаменсем каласу тата çыру тăрăх пуласçĕ. Çыру ĕçĕ икĕ тĕрлĕ иртет: диктант тата сочинени. Ытти предметсемпе экзаменсем каласу тăрăх анчах пуласçĕ.

Экзаменсем аслă шкул ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Пĕтĕм Союзри Комитечĕ çирĕплетнĕ программăсем тăрăх пулса иртеççĕ. Вăл программăсене вăтам шкулăн X-мĕш класĕнче вĕрентекен программа материалĕсем кĕмеççĕ.

Вăтам шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене, çавăн пекех 1941 çулта рабфакран тата çитĕннисен вăтам шкулĕнчен „отлично“ паллăсемпе вĕренсе тухнисене института экзаменсăрах илеççĕ.

1941 çулта педагогика училищинчен отличник оттестачĕпе вĕренсе тухнисене те, 5% шучĕпе аслă шкулта вĕренме ирĕк панисене, экзаменсăр илеççĕ.

Литфакăн 1-мĕш курсне вĕренсе пĕтернисем, вĕсем чăваш чĕлхине кирлĕ таран пĕлеççĕ пулсан, чăваш чĕлхипе литературăн отделенийĕн иккĕмĕш курсне кĕме пултараççĕ.

Заявленисене июнĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса июлĕн 31-мĕшĕчен илеççĕ.

Заявленисене институт директорĕн ячĕпе, хăш факультета кĕме шут пуррине кăтартса, çакăн пек документсемпе пĕрле памалла: тĕплĕн çырнă автобиографи, шкултан вĕренсе тухни çинчен аттестат (подлинник), воинский документ (справка), виçĕ фотокарточка.

Экзаменсем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшчен пулса иртеççĕ.

Экзамен тытма экзамене кĕртмелле туни çинчен пĕлтерӳ илнĕ хыççăн кăна килмелле. Экзамен тытма килекенсен хăйсемпе пĕрле паспорт пулмалла.

Институтăн общежити, столовăй пур. Экзамене килнисем вĕсемпе усă курма пултараççĕ.

Отличниксĕне тата приемлăй экзаменсенче пĕтĕм предметсенчен виçĕ пайĕнчĕн икĕ пайĕпе „отлично“ оценкăсем, ытти семпе „хорошо“ оценкăсем илнисене, сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласах, стипенди параççĕ.

Института вĕренме кĕмелли правилăсем вăтам шкулсенче, райĕсутĕç пайĕсенче, ВЛКСМ райкомĕсенче пур.

ДИРЕКЦИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарĕмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство историйĕн — 0—23.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. б. 58 3/4 п. л.

НТ 3115.